3576 44-14

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

# ӐМӐРТКАЙӐК

ПОЭМА

ЧӐВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар — 1944

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

3576

# ĂМĂРТКАЙĂК

*ПОЭМА*

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР—1944

# ĂМĂРТКАЙĂК

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен,
Çĕрсем çинче, шыв çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

*Константин Иванов.*

## Çĕршыв пехиллени

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Пачĕ мăшăр çунат.
Çитмĕл çичĕ çĕр урлă çул хыв,
Çулйĕре ан çухат.

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Пачĕ паттăр хăват.
Ан пулах эс хăравçă çерçи,
Пул хăватлă хăлат.

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Пачĕ хăй тивĕçне.
Ăмăрткайăк пул,—сывлăш хуçи,
Эс çуралнă вĕçме.

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Пачĕ çулăм-чĕре.
Эс ан манччĕ: санпа, паттăр сын,
Çĕршыв чапĕ çӳрет.

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Йыхравларĕ тăрса:
Ывăлăм, ку вăл халăх вăрçи,
Тух çак юнлă вăрçа.

Ĕнтĕ аслă аннемĕр-çĕршыв
Пехиллерĕ сана:
Пурнăç кӳр çĕршыва, паттăр сын,
Вилĕм кӳр тăшмана.

## 1. Кĕтӳçĕ

Хăлат та ăмăрткайăк
Вĕçеççĕ тӳпере.
Анчах та ĕмĕт кайĕ
Татах та çӳлерех.

Сӳнме пĕлмесĕр, йăлтăр-йăлтăр
Шевле сапса аялалла,
Хĕррипе тулнă Алтăр çăлтăр
Хуллен ял урлă тайăлать.

Вăрман чӳхенчĕ. Ял çӳçенчĕ.
Çакна ак шăпчăк сиссенех
Сывлăмпала çума пикенчĕ
Янравлă кĕмĕл сассине.

Çурхи васкавлă çăмăл шуçăм
Тĕтрелле йăлăм тăррине
Кал-каллăн карчĕ хăйĕн пурçăн,
Сенкер те çутă каррине.

Анчах ял лăпкă ыйхăра-ха.
Хуралтă урлă, тĕлĕк пек,
Каç тĕксĕмĕ шăвать вăрахăн
Темле тăрлавсăр кĕрĕкпе.

Çав тĕксĕме сирсе ярасшăн,
Çунат çапса та хĕртĕнсе,
Ир хыпарне кӳрсе йăвашшăн
Авăтса ячĕç автансем.

Автан юрри ял тăрăх карĕ
Çĕр тĕрлĕ сас тăка-тăка.
Вара хуллен килсе шаккарĕ
Якур мучи те алăка.

Пĕчĕк тусне ĕçе чĕнмешкĕн
Мучи килет кашни ирех.
Кăçалтанпа вĕсем пĕрлешнĕ,—
Хветут çӳрет халь кĕтӳçре.

Хветутăн амăшĕ ал-хапăл
Уçса кĕртет те мучине,
Леш çенĕкре вара:—Ăçта вăл,
Ман паттăрăм?—тесе чĕнет.

Унтан пырать те хăйĕн хытă
Аллисемпе çемçен-çемçен
Шăлать вара пĕчĕк Хветутăн
Кăтра, тăваткăл пуçĕнчен.

— Ачам, ачам,—тет вăл ачашшăн,—
Ыйхи те пĕчĕк чух анчах.—
Çак çеç вĕт кирлĕ-çке ачашăн,
Савать лăпканине ача.

Хветут çакна туйса вăр-вар çеç
Сирет çири шăналăка:
— Якур мучи, пит лăпкас марччĕ,
Вĕрентес мар ачашлăха.

Унтан, пĕр алтăр шыв ăсать те,
Тухать васкавлăн çăвăнма.
Ак вăл ĕçе кайма та хатĕр—
Кĕтӳ кĕтме те ывăнма.

Хăйне, паллах, тӳсме çук йывăр,—
Анчах вăл систермест вуçах.
Кулса калать:—Уссен те çыврăп,
Ун чух хам пысăк—хам хуçа.

Çак самантра вара—тăнла-ха!—
Йĕри-тавра пур кӳршĕсен
Янраççĕ тутлăн та пылаккăн
Ытарайми сĕт витрисем.

Анчах мучипеле Хветутăн
Кĕтӳç черечĕн апатнех
Çисе пулас пулать-çке тутă,—
Куллен сĕнккетĕн çын патне.

Ун пек чухне чи ырă пыл та
Темле пымасть чĕре патне.
Çак пурнăç витнĕ питĕ хытă
Хветутăн сисĕмлĕ чунне.

... Часах хĕвел те тухрĕ чаплăн;
Мĕнпур пуянлăх хуçи пек,
Тĕнче çине çут ылттăн сапрĕ
Вăл хăйĕн улăп ывçипе.

Вара шултра та чĕрĕ сывлăм
Пуçларĕ вут пек йăлкăшма.
Епле илемлĕ эс, çĕршывăм,—
Анчах та сан вăл шухăш мар.

Вăрăм пушша çакан та эсĕ,
Хăв нушуна ху йăтнă пек,
Тухса каятăн йĕр чĕнмесĕр
Микитасен пралукĕпе.

Ик сăрт хушши çăй-çайпа тулнă,
Çăйлаççĕ выльăх-чĕрлĕхсем,
Якур мучи те кăшт салхуллăн
Пырать хăй тĕллĕн ĕрлешсе.

Ак анлă улăх. Эс ун тăрăх
Утатăн çӳçенсе çарран.
Çапла сан пурнăç. Эсĕ тăлăх.
Асап куратăн ачаран.

Илемлĕ сывлăм—çутă ылттăн
Сан чĕпĕленнĕ уруна
Касать-çке çĕçĕ евĕр хыттăн
Пăчăртатса юн сăрхăнать.

Çапах та ир çинче, тăванăм,
Нумай-нумай пурнас килет.
Хаваслăн янăрать вăрманĕ
Пин кайăкăн сассипеле.

Куккукĕ авăтать вăрахăн,
Ача шутлать те хĕпĕртет.
Хăй ăшĕнче ыйтать:—Кала-ха,
Мĕнле кунçул мана кĕтет?

Сенкер тӳпе кĕмĕл шăнкравлăн
Тăри юррипе янăрать.
Итле, Хветут, итле те савăн,
Тĕнче илемлĕ сан умра.

Анчах сана çапах та тунсăх,
Çапах та тем ыйтать чĕре,
Сана çак улăхри чĕр-чунсăр
Пĕлмест никам та тĕнчере.

Вĕсем сан хуйăхна ăнланнăн,
Чечен те çамрăк ухльăме
Мăшăлтатса çиеççĕ канлĕн,—
Чĕлхи çеç сукка пуплеме.

Çўреççĕ лăпкă. Нўрĕ курăк
Çине выртан эс месерле.
Санра темле илемлĕ юрă
Темле хумханнăн чĕрĕлет.

Инçе, инçе эс тинкеретĕн
Хура та тарăн куçупа.
Сан шухăш лăпланмасть пĕрре те,
Тĕнче талккишĕпе чупать.

Çўлте-çўлте—мĕнле вăл ирĕк!—
Хăюллăн ярăнать хăлат.
Ача шутлать: «Мĕскершĕн пирĕн
Вăл çук-ши çавăн пек хăват?..

Мĕскершĕн çукка-ши çунаттăм?
Мĕншĕн çунатлă мар чĕре?
Эп те вара хăлат пулаттăм,
Çўреттĕм ирĕк тĕнчере...»

Çак вăхăтра пĕр систермесĕр
Мучи пырать, кăшт ўсĕрет:
— Мĕн шухăшлан, ачамçăм, эсĕ?
Мĕскер куратăн тўпере?

Хветут тăрать. Вăл кăшт именнĕн:
— Хăлат çине пăхатăп,—тет.—
Мĕскерле вăй ăна çĕкленĕ?
Мĕнле вăл пит çӳлте вĕçет?

Якур мучи вара ларать те,
Хăй чĕлĕмне кăшт тӳрлетсе:
— Хăлатсенчен те вăйлăрах,—тет,—
Вĕçеççĕ ăмăрткайăксем.

— Мучи, эс курни ăмăрткайăк?
— Таçта, тен, курнă пуль ара...
Унтан вăл Хветута пĕр лайăх,
Манми юмах ярса парать.

## 2 Якур мучи юмахĕ

Çав-çав çĕрте, çав çĕрте,
Вĕçĕмсĕр çеçен-хирте,
Çĕрпе пĕлĕт хушшинче,
Ырă сывлăш уççинче,
Çут хĕвелĕн ăшшинче
Пуянăн та чухăнăн
Пĕр сунарçă пурăннă.

Ухă пулнă—пурлăхĕ,
Тĕнче пулнă—ырлăхĕ,
Юлташ пулнă—ăмăрткайăк,
Вĕçсе пынă вăл çӳлтен.
Пурнăç пулнă пыл пек лайăх,
Анчах пыл мĕнне пĕлмен.

Чухламан—мĕскер вăл хуйăх,
Пурте янтă, пурте хатĕр,—

Нушине те ăнланман.
Каçхине çутатнă уйăх,
Кăнтăрла вара ахаль те
Уншăн пулнă пит аван.

Пуснă ура кĕллипе—
Шывĕ тухнă кўлĕ пек.
Туртса янă çĕмренне—
Кайăк ўкнĕ ун умне.

Хĕвел хĕртнĕ—ăшаланнă,
Ларнă, çинĕ—апатланнă,
Унтан утнă малалла.
Каç пулсассăн канмалла,
Уйхир пулнă—ун минтерĕ,
Пĕлĕт пулнă—çивитти.
Пурнăç пулнă—эс мĕн терĕн,—
Кунта çук-ха ун пекки.

Ăмăрткайăкĕ унтах—
Ларнă тĕрĕс хуралта.
Кăнтăрла та ывăнман вăл,
Каçхине те куç хупман вăл,
Пуç вĕçĕнче пĕр пĕччен
Ларнă çапла вăл ирччен.
Çитмĕл çичĕ çил тухсан та,
Тымак çăмăр тапрансан та,
Çунаттипеле хупланă
Хайĕн шанчăклă тусне.
Тусĕшĕн çапла пултарнă
Пур инкексене тўсме.

Ирпе тăнă хаклă тусĕ,
Питне çунă сывлăмпа.
Çав сунарçăн пичĕ-кусĕ

Сывă пулнă çавăнпа.
Ăмăрткайăкĕ çĕкленнĕ
Татах пĕлĕтрен çӳле.
— Эп кунтан сыхлатăп,—тенĕ,—
Эсĕ çĕр çинче çӳре.

Çӳлтен пурте курăннă,
Ăçта майлă, вырăнлă,
Аçталла кайсан аван—
Ăмăрткайăк—ыр тăван
Хăй тусне йăлтах систернĕ,
Куç шăрçи пек хӳтĕленĕ,
Нихçан ăна пăрахман,
Куç умне инкек тухсассăн,
Сĕмсĕр кашкăр курăнсассăн,
Амăрткайăк тӳперен,
Чул пек вăркăннă çĕре.

Çутă хурçă пек хăватлăн
Чĕрнине вăл кĕртсе лартнă
Сĕмсĕр кашкăр ĕнсине.
Унтан çивчĕ сăмсипе
Çав тăрлавсăр кашкăрăн
Ик куçне те харсăррăн
Чавса илнĕ çийĕнчех,—
Халь каяймăн пит инçех.

Çапла сынпа ăмăрткайăк,
Пурăннă питех те лайăх,
Пĕр-пĕрне хуçа темен,
Хăрхăм-тарçă та темен;
Кайăк савнă этемме,
Этем савнă кайăка,
Пурнăç пынă лайăхах.

Çак сунарçă хăй тусне
Пĕчĕкрен пăхса ӳстернĕ.
Кайăк пĕчĕкрех чухне
Хăйĕн хулпуççи çине
Вăл ăна лартса çӳренĕ.
Алăран апат çитернĕ,
Унтан çӳлелле вĕçтернĕ
Тусем урлă инçене.
Вăл çапла виçме вĕрентнĕ
Аслă çутă тĕнчене.
Кайăка вăл ят та хунă,
Унăн ячĕ Ирĕк пулнă.—
Ĕмĕр-ĕмĕр ирĕкре!
Сенкер çутă тӳпере,
Ирĕкĕм, çӳре хăюллăн,
Çил çӳренĕ пек çӳре.

Çапла иккĕшĕн вĕсен
Пурнăç пулнă хăруш мар.
Анчах сывăхрах иккен
Вĕсен пулнă пĕр тăшман.

Хăрпан-пуç патша панчен,
Тĕксĕм сĕм-вăрман енчен,
Ăнсăртран, çĕрле пĕрре,
Туссем сывăрнă çĕре
Вĕçсе килнĕ, вăрă майлă
Икĕ пуçлă ăмăрткайăк.
Ирĕкпеле сунарçа
Вăл шутланă çав касах
Систермесĕр тапăнма,
Хурахла тытса кайма,
Хăрпан-пуç патша валли
Сĕткенпе юн ĕммелли,
Витесем тасатмалли

Чĕмсĕр сĕм-чура тума,
Çурăм урлă кашни кун,
Выльăх пек, патак хума.

Икĕ пуçлă ăмăрткайăк—
Тăхланран çуначĕсем.
Хурлăх курнă нумай халăх,
Тухайман ун айĕнчен.

Икĕ пуçлă ăмăрткайăк
Ĕмĕтленнĕ:—Тытса кайăп,
Систермесĕр, вăрă пек,
Юлашки çак Ирĕке.

Акă каçĕ тĕм-хура,
Акă вăл вĕçсе пырать
Ирĕклĕ çеçен-хире,
Икĕ тус та ик чĕре
Лăпкăн çывăрнă çĕре.

Анчах çĕрлехи тăшман,
Шăппăн вĕçеймен ниçтан.
Тăхлан çунат варкăшать,
Хирти кăлкан каш-кашлать.
Шăхра-шăхра çил вĕрет,
Хăрушлăха систерет.

Ирĕк-кайăк кăларать
Пуçне çунат айĕнчен.
Хайĕн тусне вăратать
Инкек килсе çитиччен.
Унтан, вут та çиçĕм пек,
Çурса тĕксĕм тӳпене,
Хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе
Çӳлелле вăл хăпарать.

Ак пуçланчӗ çапăçу,
Ай, хаяр-çке чăтма çук!
Тăвăл мар ку, çăмăр мар,
Пăрпа хутăш пӗрхӗнет.
Çитмӗл çичӗ çухрăма
Чӗп-чӗр юнах сирпӗнет.

Икӗ пуç та твată куç,
Паллах ӗнтӗ, хăватлах.
Анчах пирӗн Ирӗк-тус
Парăнмасть-çке хăвăртах.

Пуçӗ унăн иккӗ мар,
Анчах ӳснӗ ирӗкре.
Куçӗ унăн тваттă мар,
Анчах чунӗ çирӗпрех.

Пăлтăр-пăлтăр çаврăнса,
Нумай вăхăт çапăçсан,
Икӗ пуçлă вăр-хурах
Халран кайрӗ лăштăрах.

Вара çакă самантра
Ирӗк-кайăк тăшманран
Аяккарах пăрăнчӗ.
Унтан татах пур вăйран
Тăшман çине тăрăнчӗ.
Çутă хурçă сăмсипе
Пырса çапрӗ çиçӗм пек,
Сулăмлăн та вирлӗн çеç
Тăшмана вăл пуçӗнчен.
Пырса çапрӗ, тӗлӗнчӗ—
Пуç чăлпар çеç сирпӗнчӗ.

Хăрах пуçлă çав тăшман,
Путсӗр хура çилтăман,

Тытӑнса тек тӑрайман
Ҫӗрелле вӑл вӑркӑнать,
Хӗрхенмешкӗн йӑлӑнать.

Хайхискер, кунта ҫӗртен,
Пирӗн тусӑмӑр сунарҫӑ
Уххине вӑшт! туртса ячӗ,
Ҫил пек сирпӗнчӗ ҫӗмрен.
Пырса ҫапрӗ вӑл хӑватлӑн
Ҫӗмрен турӗ хӑй ӗҫне.
Пырса ҫапрӗ те салатрӗ
Лешӗн юлашки пуҫне.

Ир те пулчӗ. Ҫут хӗвел
Чупса тухрӗ уйхире.
Икӗ тус хайхи пӑхаҫҫӗ,
Икӗ тус хайхи кураҫҫӗ:
Ҫӗрлехи ҫав усалӑн
Пуҫӗ пулнӑ ултавлӑ,
Ҫийӗ пулнӑ ылттӑнран,
Капташки вара—тӑмран.

Ҫапла Ирӗк Пусмӑра
Ҫӗннӗ юнлӑ вӑрҫӑра.
Икӗ пуҫлӑ вӑр-хурахсӑр
Пӗтнӗ тет Хӑрпан-патша та
Ҫакӑн хыҫҫӑнах вара.

Икӗ тус татах та лайӑх
Тытӑннӑ тет пурӑнма.
Ҫапла ӑслӑ ӑмӑрткайӑк,
Ик пуҫли мар, суйи мар,
Ылттӑнлана ултав мар,
Ҫынна кӳнӗ ирӗклӗх,
Чуна кӳнӗ ҫирӗплӗх;

Сирнĕ асап-хурлăха,
Телей кӳнĕ халăха.
Ӳссе çитĕн, курăн эс,
Мĕнле пулĕ пурăнăç.

* * *

Юмахне мучи пĕтерчĕ,
Чĕртрĕ сӳннĕ чĕлĕмне.
Ункăн-ункăн вăл вĕçтерчĕ,
Хăйĕн ырă тĕтĕмне.

Хветут тăчĕ. Унăн халĕ
Анлă хулĕсем çинче
Ăмăрткайăкăнни майлă
Çунат шăтнăн туйăнчĕ.

Икĕ аллине вăл сарчĕ,
Чăн-чăн ăмăрткайăкла,
Çил пек, вĕçнĕ пек чуптарчĕ
Малалла та тăвалла.

Ак вăл сăрт çине çитет те,
Янратать пур вăйĕпе:
— Курса юл, мучи, вĕçетĕп.
Паттăр ăмăрткайăк пек.

## 3. Шкулта

Вăрçăсемпе хăрушă выçлăх
Шăлланнă, шелсĕр çавипе
Çĕршывăм тăрăх тухнă хыççăн
Лăпланчĕ пурнăç майĕпен.

Анчах та тăлăхри Хветутăн
Пайтах-ха умĕнче асап.
Ĕмĕчĕпе кăна вăл тутă,
Çав ĕмĕт çутă та таса.

... Кĕр кунĕ çитрĕ. Çил хастаррăн
Килсе шаккарĕ çенĕке.
Пуçри çут ĕмĕт чĕннипе
Хветут кăçал тытма шутларĕ
Алла шур хут та кĕнеке.

Антив, сив çил туртса силлетĕр
Çĕр саплăк лартнă сăхмана.
Хветут халь шикленмест пĕрре те,
Шкула каймашкăн тумланать.

Шкул алăкне уçса хăюллăн
Ялан çӳренĕ пек кĕрет.
Шăв-шавпала шкул çурчĕ тулнă.
Çурхи велле пекех кĕрлет.

Кĕрет учитель. Куçлăх витĕр
Темле хăтăрас пек пăхать.
— Ачсемĕр,—тет,—шавлатăр питĕ.
Вĕлле часах ак шăпланать.

Унтан учитель кăшт йăпатнăн,
Кăшт çирĕппĕн, кăшт вашават,
Ыйтма пуçлать ак: кам мĕн ятлă,
Мĕнле кашнийĕн хушамат.

Кунта ун куçĕсем Хветутăн
Куçĕсемпе тĕл пулсанах,
— Орлов,—тет лешĕ питĕ хыттăн,
Çаплах калать вăл, кулса мар.

Учитель ун ҫине вӑрахӑн
Пӑхать хайхи, шалт тӗлӗнсе.
Кунта ҫырма та вӑл пӑрахрӗ,
Ручки ун ӳкрӗ аллинчен.

«Мӗнле Орлов?»—шутлать хӑй тӗллӗн,
Шутлать те темӗскер кӗтет.
Ун ашшӗ пулнӑ-ҫке—кам пӗлмӗ?—
Ялти чи ятсӑр Мӗкӗте.

Унтан Хветутӑн хура куҫӗ
Кӑшт та сикменнине кура,
Учитель ҫирӗппӗн те уҫҫӑн
«Орлов» тесе ҫырса хурать.

Мӗнех вара—пул ӑмӑрткайӑк,—
Шутлать учитель ӑшӗнче.
— Хушамату питех те лайӑх,
Хута хастаррӑн вӗрен ҫеҫ.

Антив,—ача маттур эс, ҫивӗч,—
Чӑвашӑн пултӑр хушамат.
Ҫапла Орлов Федот Никитич
Йыша пӗр танӑн хутшӑнать.

Ун чӗринче хай ӑмӑрткайӑк,
Мучи юптарнӑ ыр юмах,
Кӗрсе вырнаҫнӑ пурӑнмалӑх
Йӑва хывса яланлӑхах.

## 4. Уявсемпе кӳренӳсем

Ӗмӗт, ӗмӗт ҫил-ҫунатлӑ,
Ӗмӗт хӑйӗн ачине
Темле юрӑ пек хӑватлӑн
Малаллах утма чӗнет.

Вăл утать çула тухасшăн,
Пикенсех çӳрет шкула.
Саспаллипеле паллашнă,
Çырăва шыв пек вулать.

Çумĕнчи çĕр саплăк витĕр
Çил вĕрсен те, пурпĕрех,
Хăйĕн ĕмĕтне вăл çитĕ,
Мĕскĕн пулмĕ ĕмĕрех.

Антив халĕ, шăнкăравлă
Çăварни, çĕр кисретсе
Кайтăр, кайтăр вĕсен тайлăк
Пӳрчĕ умĕнчен иртсе.

Антив, катаччи кĕрлетĕр,
Лентăсем вĕлкĕштерсе.
Антив, урамра пĕрре те
Ан лăпланччăр юрăсем!

Шар-кĕçентĕр хура учĕ,
Янăраттăр Ямаша.
Ларса пыччăр та йăл кулччăр
Хĕрпе каччă юнашар.

Пурпĕрех Хветут пĕчченĕн
Кĕнеке тытса ларать.
Хăлхине, вуланăçемĕн,
Аллипе хуплать вара.

Уява хăлхи ан илттĕр,
Уяв мар ун чĕринче.
Çамрăк ĕмĕт шăв-шав витĕр
Туртăнать таçта инçе.

Кавказ тăвĕсем пит çӳллĕ,
Çитме çук пек нихăçан.
Анчах ăмăрткайăк çулĕ
Çав тусем урлах каçать.

Ирĕкре çеç пурнăç лайăх,
Ирĕкре кăна хăват.
Аслă кайăк—ăмăрткайăк
Ирĕке кăна сават.

Хĕллехи кунсем иртеççĕ.
Ав шурилнĕ кантăка
Хĕвел хăвăрттăн сирет те
Ăшшине пӳрте тăкать.

Хветут урăх тӳсеймесĕр
Тухать çутă урама.
Çуркунне—мĕн терĕн эсĕ—
Çутçанталăк вăранать.

Ак çитет мăнкун эрни те.
Ямашра татах шăв-шав.
Анчах ун хăçан-ши çитĕ
Çутă ĕмĕтри уяв?

Ешĕл-симĕс çамрăк курăк,
Пăхсан куç та ыратать.
Ачасем ав çерем тăрăх
Кустараççĕ çăмарта.

Шăнкăрч caслă вĕрçĕн купăс
Юрă шăрататать лере.
Çавăнта, Хветутăм, чуп эс,
Пуçна тыт эс çӳлерех.

Анчах вăл утать хăюсăр
Чуччу ярăннă çĕре.

Мăнкун çитрĕ капăр тумсăр,
Парнесемсĕр-мĕнсĕрех.

Çынсене кăна пăхатăн
Тĕлĕнсе те тĕмсĕлсе.
Яшсем тăхăннă çут атă,
Хĕрсем çакнă кĕмĕлсем.

Çамрăка уяв паха мĕн,—
Асамат кĕперĕ пек
Ялкăшать Ямаш урамĕ
Тĕрлĕ тĕслĕ тĕрĕпе.

Кĕрен-хĕрлĕ, сенкер, шурă,—
Çут тĕнчен пур тĕсĕсем
Варкăшаç мăнкун чуччувĕ
Чу-кайса, пи-кайнăçем.

Илĕртӳллĕ хĕрпе каччă
Тăнă та чуччу çине
Вĕçнĕ евĕр ярăнаççĕ,
Пăхсан чун та çӳçенет.

Купăс ывăнма пĕлмесĕр
Чĕрере чĕртет-çке вут.
Аякра тăратăн эсĕ,
Тарăн шухăшлă Хветут.

Ярăнма сана чĕнмеççĕ.
Санăн çĕтĕк сăхманна,
Эс сисен, хĕрсем тиркеççĕ.
Эс ялта—кĕтӳç кăна.

Эс çапла пĕччен тăратăн,
Кунта акă сан умна

Пĕри пычĕ, тăрăхланăн
Тытса пăхрĕ сăхманна.

— Мĕн йышши сукна ку санăн?—
Ыйтрĕ вăл кула-кула.
Эс ăна аван паллаттăн,
Ашшĕ ун куштан кулак.

Эс чĕнмерĕн. Сан чĕрӳ çеç
Вĕриленчĕ çилĕпе.
Эс кĕçех çапмарăн хирĕç
Çав манкаллă селĕпе.

Хĕвĕнтех пек леш хай чул та
Санăн туйăнчĕ кунта.
Анчах эсĕ çирĕп пултăн,
Парăнмарăн саманта.

Хăвна ху эс лăплантартăн:
Мăшкăл пымĕ нумая,
Пулĕ пирĕн урамра та
Ырă савнăçлă уяв.

Вара эс хуллен уттартăн,—
Тайлăк пӳрт сана кĕтет.
Мăнкун иртрĕ. Эс хурлантăн.
Часах çимĕк те çитет.

Çепĕç çимĕк ял-йышсемшĕн
Ĕмĕрхи йăлипеле
Хуйхине те, савăнăçне те
Пĕтĕмпех кӳрет пĕрле.

Авалхи çĕре чысласçĕ
Чăвашсем çав çимĕк кун.

Хӗвелччен мунча хутаҫҫӗ,
Тӑхӑнаҫҫӗ шурӑ тум.

Ваттисем—ватта аснаҫҫӗ.
Чӗреспе йӑтса сӑра.
Хӑйсем маййӑн уттараҫҫӗ
Чечек сарнӑ масара.

Ҫамрӑксем вара саваҫҫӗ
Шухӑ, ҫуйкӑн хӑвата.
Ҫимӗке вӗсем каяҫҫӗ
Вӑрман урлӑ—Шӑмата.

Пултӑр ҫимӗк—пултӑр чӗрӗ,
Ахальтен-и вӑл уяв!
Сар-хӗре шырать яш-кӗрӗм,
Чунтанах кӗтет туя.

Кӑкӑрти хавaслӑ юрӑ
Аслӑ ирӗке тухса,
Омашне вӑрманӗ урлӑ
Шыв пекех каять юхса.

Тули-тули-тули, тусӑм,
Тусӑм, тӑрччӗ ту ҫинче.
Сан тӗле пулсассӑн куҫӑм
Туй пулассӑн туйӑнчӗ.

Шӑрататать талянкӑ-купӑс
Хӑйӗн шухӑ юррине.
Ҫимӗке, Хветутӑм, чуп эс,—
Курса юл ҫу ыррине.

Анчах акӑ ҫимӗк кун та
Пушӑ пахчана кӗрсе,

Уява эс пăхса юлтăн
Карта хушăк витĕр çеç.

Хăвăн уявна кĕтетĕн,
Ёмĕт ялкăшать ялан.
Ăнсăртран витре илетĕн
Сивĕ шыв ăсма каян.

Çимĕкре пулман пулсан та,
Ăш хыпса килен çынна
Уçă шыв ăсса парасссăн,
Пулĕ çимĕк курнăннах.

Çапла эсĕ ыр тăватăн
Çынсене çăл шывĕпе.
Ыр тăвас вĕсем сана та
Хĕвелçаврăнăшĕпе.

Çул çинче çапла тăраттăн,
Акă, тĕлĕкри пекех,
Пырса тухрĕ вашаватлăн
Сан умна пĕр сар-пике.

— Ах, питех те ăшăм хыпрĕ,—
Терĕ вăл кулкаласа.
Курка тытрĕ, чăпăрт сыпрĕ,
Сăнĕ хăйĕн тап-таса.

Именсе куçна эс тартрăн,
Пăхаймарăн хĕр çине.
Хĕр кулайрĕ, йăлтăр-ялтăр
Вылянтарчĕ шăрçине.

— Пăхсам,—терĕ хĕр хăюллăн,
Куçна мĕн тартан вара?—

Эсӗ хӗр кусне тӗл пулатӑн
Витрери таса шывра.

Хӗр те санӑнне тӗл пулчӗ,
Пӑхрӗ вӑл тинкеререх...
Йӑлкӑшса яланлӑх юлчӗҫ
Ҫав куҫсем сан чӗрере.

## 5. Ӗмӗт ҫунатланать

Кӗрхи кунсем, тӑванӑм,
Хӑйсен илемӗ тулӑх,
Хӑйсен ырри-кӗввийӗ,
Хӑйсен тивлечӗ пур.
Кӑнтӑралла ял урлӑ,
Кикаклатса салхуллӑн,
Ачалӑх иртнӗ евӗр,
Иртет ав кайӑк-хур.

Кайӑк-хура ыр суннӑн
Ав Омашне вӑрманӗ
Варкӑштарать сар тутӑр—
Тӑкать сар ҫулҫине.
Ҫак ир вара Хветутӑн
Ачалӑхӗ ӑсаннӑ,
Хӑюллӑ яшлӑх кӗнӗ
Ун уҫӑ чӗрине.

Пӗрре ҫуралнӑ ӗмӗт
Паман пӗрре те канӑҫ.
Вӑл ӑмӑрткайӑк майлӑ
Ҫӳренӗ тӳпере.
Военкомат каланӑ:
— Ӗмӗтленни—аван ӗҫ.
Сывлӑш флотне сӑмахсӑр
Илме пулать сире.

Çав самантрах Орловăн
Икĕ çунат—ик çулăм
Хăватлăн ÿссе ларнă
Ик хулпуççи çинче.
Киле вăл, çулсăр-мĕнсĕр,
Вĕçтернĕ уйхир урлă;
Ăна пăхса йăл кулнă
Кĕрхи кĕрен тĕнче.

Чарусăр шухă çил пек
Киле çитсе кĕрсессĕн,
Вăл амăшне çĕкленĕ
Тĕреклĕ аллипе.
— Анне, анне, аннеçĕм,
Анне, чухлатни эсĕ,
Эпир часах вĕçетпĕр
Чăн ăмăрткайăк пек.

Анчах мăнтарăн амăшĕ
Пĕр савăннă, хурланнă,—
Тем çуннă ун, вăрканă
Яланхи пек шалтан.
Салтак валли вăрахăн
Вăл кутамка пуçтарнă,
Тирпейлĕн хатĕрленĕ
Сухарипе шăрттан.

Ун ывăлĕ çын пулчĕ—
Ку питĕ пысăк савнăç.
Анчах паян сасартăк
Асатмалла инçе.
Юлташĕсем пуçтарăнчĕç,
Ыталанса юрларĕç

Çӳлти çут çăлтăр витĕр
Çул курăнни çинчен.

Хисеплĕ председатель
Часах ак кӳлсе килчĕ
Колхозăн çил-çунатлă,
Кăвар пек йăрине.
— Сывпул, тăван Ямашăм!..—
Кĕрхи чарусăр çил çеç
Кервен урапа хыççăн
Хир тăрăх вирхĕнет.

— Сывпул, тăван уйхирĕм!
Сывпул, тăван ял-йышăм!
Сывпулăр та пур пулăр,
Хĕрсем те каччăсем!
Сывпул, Якур мучиçĕм,
Мухтав сана иртнишĕн,
Çухалмĕç нихăçан та
Эс чĕртнĕ юмахсем.

Юртать тур ут çул тăрăх,
Ун капăр çилхи витĕр
Çĕр çитмĕл çичĕ саслă,
Хавáслă çил вĕрет.
Хĕрсем сулаççĕ тутăр:
— Сывпулăр, лайăх çитĕр,
Анчах тасыта çитсен те
Ан манăрсам пире!

Сана ăсатма тухнăн,
Вĕçĕ-хĕррисĕр, шутсăр
Çул хĕрринче тăраççĕ
Колхоз çĕмелĕсем.
Ав Омашне вăрманĕ

Варкăштарать сар тутăр,
Пуçне таять мăнаçлăн
Тур йăйăр юртнăçем.

Сывпул, тăван çĕршывăм,
Сывпул, тăван кĕтесĕм!
Лашам, утсам, васкавлăн,
Çитес çĕре çитсем!
Ĕнтĕ, тăван çĕршывăм,
Сан ывăлна кĕтессĕ
Чи аслă та чи паттăр
Ĕçсем те ĕмĕтсем.

Хăюллисем—вĕçессĕ,
Хăравçисем—ӳкессĕ,
Чăн малтанхи урок ку,
Чăн малтанхи сăмах.
Тĕпче хăвна, тăванăм,
Пулас тесен вĕçевçĕ—
Хăюллисен йышне эс
Кĕрес тесен чăнах.

Кам нăрă пек аранăн
Йăраланма çуралнă,
Ăншăртлансах ăмсантăр—
Вĕçме пултараймасть.
Орлов çакна вуланă.
Орлов çакна ăнланнă.
Вăл туйнă—ун чĕрийĕ
Вĕçме кăна хавас.

Юмахпала çуралнă
Хăватлă ăмăрткайăк
Ун чĕринчех çӳренĕ,
Вăл пулнă хăй—чĕре.
Чĕри ăна çĕкленĕ:

— Сана эп илсе кайăп
Чи харсăр кайăкран та,
Тăванăм, çӳлерех...

Анчах малтан Орлована,
Чи тимлĕ шкул ачи пек,
Ларсах вĕренме лекнĕ
Вĕçев теорине.
Райтсем—кайăк пулсассăн,
Икар—вăл пулнă чĕпĕ,—
Çапла пин çул этемлĕх
Вĕçмешкĕн вĕренет.

Пин-пин çул ĕмĕтленнĕ,
Çуратнă пин легенда,
Икар хăй те çӳренĕ
Легендăра кăна.
„... Халь эс вĕçен, çапах та
Пĕр штопăра лекен те
Унтан тухаймасассăн
Пуç-хĕрлĕ вăркăнан".

Çапла сырать Орловăн
Пĕрле ларан юлташĕ
Хăй умĕнчи сар питлĕ
Таса тетрадь çине.
«Штопор тени вăл тĕрлĕ,—
Мĕнли çинчен каласшăн?—
Пĕр тĕрлипе уçăççĕ
Эрех кĕленчине».

Çапла Орлов та сырчĕ,
Кулмасăр сырчĕ, çирĕп,
Хăйĕн кулăшларах та
Ытарлă ответне.
Çапла кунсем иртеççĕ.

Герой ман кунӗн-ҫӗрӗн
Васкать канма пӗлмесӗр
Ҫитме хӑй ӗмӗтне.

Часах, часах вӑл акӑ
«У-2» ҫине те ларчӗ,
Инструкторпа пулсан та—
Ҫапах вӑл сывлӑшра.
Мухтав, этем ӑстанӗ!
Мухтав, этем хӑвачӗ!—
Иртни те аса килчӗ.
Ӑна ҫак хушӑра!

Ытла та мӗскӗн пулнӑ,
Никам пӗлмен кӗтӳҫӗ;
Куҫҫулӗ витӗр пӑхнӑ
Ҫӳлти хӑлат ҫине.
Ҫӗршыв ӑна ҫӗклерӗ,
Халь акӑ ҫул яр-уҫӑ,
Халь тӳперен сӑнать вӑл
Мӗнпур ҫут тӗнчене.

Часах Орлов хӑй тӗллӗн
Вӗҫме пуҫларӗ лайӑх,
«У-2» кӑна пулсан та
Ҫунатлӑ вӑл ҫапах.
Ҫапла ҫунатне сарчӗ
Пӗр ҫамрӑк ӑмӑрткайӑк,
Ҫапла ҫӳре пуҫларӗ
Ӗмӗтленен ҫулпа.

Ун чух ҫӗршывӑм хӑй те
Тинреххӗн ҫунат сарнӑ,
Ҫитӗнекен хӑвачӗ
Хӑпарнӑ кӗрлесе,

Челюскинçăсен чапĕ
Тĕнчипеле янрарă,
Тĕнче умне çĕкленнĕ
Пĕррремĕш геройсем.

Унтан Валерий Чкалов,
Пĕрремĕш çиçĕм евĕр,
Тĕтре витĕр çул хывrĕ
Çулпуç маршручĕпе.
Унтан шур полюс урлă
Америка вĕçетпĕр,
Полюсалла кĕретпĕр
Чи аслă хуçа пек.

Хăюллă вĕçевсен тапхăрĕ—
Мухтавлă, чаплă тапхăр.
Кашни ун чух çӳренĕ
Хăй майăн çунатпа.
Пĕр-пĕр сăвăр пек лăпкă
Вăрмантрестри бухгалтер
Вышка çинчен чăмтарнă
Сенкер парашютпа.

Кашни йĕкĕт шутланă
Пулмашкăн истребитель,
Яш-кĕрĕмре çӳренĕ
«Хурчка» сăмах кăна.
— Хурчка,—тенĕ Орлов та,—
Хурчка аван вăл пит те.—
Анчах та урăххийĕ
Канăç паман ăна.

Хурчка аван вăл питĕ.
Çапах та ăмăрткайăк
Мĕн пĕчĕкрен çуралнă

Орловăн чĕринче.
Начальнике калать вăл:
— Бомбовозпа эп кайăп.
Унпа епле пулсан та
Вĕçме пулать инçе.

## 6. Чăваш ачин çулĕ

Чăваш ачи, сассуна пар.

Çеçпĕл Мишши

Хăватлă марш. Вĕçевçĕсем маттур.
«Чĕремĕр пирĕн çулăмлă мотор...»
Шкултан тухса çĕн ĕмĕт-шанчăкпа
Орлов вĕçет бомбардировщикпа.
Тăват мотор, ик сарлака çунат, —
Тăван çĕршыв ăна ыр çул сунать:
Хăюллă çул, инçе те çÿллĕ çул, —
Çав çул çинче эс пысăк паттăр пул!
Çав çулпала эс ирĕклĕн çÿре.
Эс ху хуçа çак аслă тĕнчере.

Орлов вĕçет. Çуралнă вăл вĕçме:
Пĕр вĕçĕнчен тухать тепĕр вĕçне.
Енчен-енне виçет çĕршывăма,
Ĕмĕтленет çĕнĕ çулсем хывма.
Вăл кăнтăрти хĕвелпелеваскать
Çитме часрах пăрланнă Мурманска.
Шур çĕлĕклĕ мухтавлă Кавказа
Вăл урлă-пирлĕ çичĕ хут каçать.
Пăрпа та, çăмăрпа та çапăçать,
Балтикăран тухать вăл Тухăçа.

Вăл Ази урлă вĕçнĕ чух пĕр ир,
Кĕтсе илет ăна тăван Памир.

Малтанхи хут кунта вăл — аякра —
Курăнаçать хай ăмăрткайăкпа.
— Аван-и, тусăм, ĕмĕтри тăван?
Мĕнле пурнан, ăçта эс çул тытан?
Хай аслă кайăк тем ăнланнă пек
Варкăштарать хăлаç çунаттипе.
Юласшăн мар паян вăл намăса,
Орловпала вĕçет вăл ăмăртса.

— Вĕç, вĕç, хăватлă тусăмçăм, кĕрле!
Çитес çĕре часрах çитер пĕрле.
Хастаррăнрах эс сывлăша кассам,
Пире чĕнет юнпа вĕрен Хасан.
Вут-çулăм хыпнă çапăçу хирне
Пире тăван çĕршывăмăр чĕнет.
Анчах та ăмăрткайăк пит хуллен
Вĕçет, çынпа ăмăртаймасть иккен,
Ыра сунса çунаттипе сулать,
Вăл Орловран инçе тăрса юлать.

— Сывпул эппин эс, сывлăшри тăван.
Çĕнтерӳпе эп таврăнăп ыран.
Сан чыслăхна та санăн йăвуна,
Эп, тусăм, памăп сĕмсĕр тăшмана.
Сывпуллашса вĕçевçĕ ăсанать
Çапла хĕрӳллĕ, юнлă Хасана.
Çитес çĕре çитет те вăл ирех
Харсăрланса çапăçăва кĕрет.
Тăшман çине вăл вилĕм çеç ярать,
Çапла чăваш хăй сассине парать.

Çапла вăл малтанхи çапăçура
Хăйĕн вăйне тĕрĕслесе курать.
Тепĕр çултан ун йывăр та шултра
Бомбийĕсем ӳкеç Халхин-Голра.

Сыхлать Орлов тăван çĕршыв чысне,
Вăл шанчăклăн тăвать хăйĕн ĕçне.
Ăçта Орлов пырса çапать хастар,
Унта вара тăшманшăн пурнăç мар.
Ăçта Орлов юррийĕ илтĕнет,
Унта çĕршывăн чапĕ çĕкленет.

Иртеç кунсем. Тăван çĕршыв тавра
Тĕнче вăрçи тискер çилне çаврать.
Орлов васкать Хĕвеланăçнелле,
Çитес çĕре татах ун çитмелле.
Ун вĕçмелле питех те аякка,
Татах курать вăл ăмăрткайăка.
Варкăштарса хăлаç çунаттипе
Леш саламлать ăна çĕнтерӳпе:
— Салам сана, çут çăлтăрлă çунат,
Тупнă çулна нихçан та ан çухат!

Тусĕпеле сывпуллашса хавас,
Орлов васкать. Ун чĕринче приказ.
Çут тӳпере мăнаçлăн кĕрлесе,
Пĕр тикĕссĕн ĕçлеççĕ моторсем.
Çунат çинче ик çăлтăр çĕклесе,
Орлов вĕçет. Чĕнеççĕ тăвансем.
Аван чухлать вăл — ирĕклĕх мĕскер, —
Чăваш ачи, хăй мăшкăл тӳснĕскер,
Çампа вăл ăмăрткайăк пек çӳрет.
Тăвансене телейпе чыс кӳрет.

Çав кĕркуннех, пĕр тĕксĕм каçхине,
Тăшман сикет тăван çĕршыв çине.
Орлов васкать. Вĕçет Çурçĕрелле,
Тăшман усал. Ăна пĕтермелле.
Орлов хаяррăн бомбăсем тăкать,

Тăшман чăмать пуç-хĕрлĕ шăтăка.
Белофинсем вара çавăн чухнех
Хыпса пăхаç Орлов кучченеçне.
Çапла, çав сулхăн Çурçĕрте вара
Чăваш татах хăй сассине парать.

Орлов вĕçет. Татах çулсем хывать,
Унпа çўрет вут-çулăмлă хăват.
Çут тўпере мăнаçлăн кĕрлесе,
Пĕр тикĕссĕн ĕçлеççĕ моторсем.
Çĕршывăма чыспа мухтав кўрсе,
Çунатсенчен çиçеççĕ çăлтăрсем.
Вăл Балтика таврашĕнче вĕçет;
Ăçта çитет, унта телей çиçет.
Часах Эстони — Латви — Литвара
Чăваш ачи хăй сассине парать.

Часах хĕн-хурлă Бессарабире
Çынсем кĕтсе илеççĕ çут ире.
Орлов унта хăй çунатти çинче
Илсе пырать телейлĕ çĕн тĕнче.
Аван чухлать вăл — ирĕклĕх мĕскер,
Чăваш ачи, хăй мăшкăл тўснĕскер,
Çампа вăл ăмăрткайăк пек çўрет,
Тăвансене телейпе чыс кўрет.
Чăваш ачи ăçта вĕçсе пырать,
Унта вăл хăйĕн сассине парать.

## 7. Тўлек те лăпкă каç

Орловăн тусĕ — Николай Гастелло.
Ăна Орлов тăван пек юрататъ:
Анчах та ун юлма лекет хăй тĕллĕн,
Куçать Гастелло урăх отряда.

Хӑй кайнӑ чух вӑл хӑйӗн отрядне тӗ,
Самолетне те Орлова парать.
— Шанатӑп,— тет, — сана аван пӗлетӗп,
Санах пулать ҫак ӑслӑ аппарат.

Умра тӑрать тӑват моторлӑ улӑп,
Ӑна Гастелло лӑпкӑн ачашлать.
— Учитель, — тет Орлов, — тивлетлӗ пулӑп,
Тупа тӑватӑп, — тет вӑл чӑвашла.

Гигант машинӑн ҫӳллӗ фюзеляжӗ
Ҫине кӑвак сӑрпа, ӑста алпа
Кӗрнеклӗ «2» ҫырнӑ. Ҫампа мар-ши
Ӑна кунта кашни пилот паллать!

Мухтавлӑ улӑп — «Голубая двойка»,
Ӑна ҫапла чӗнеҫҫӗ отрядра.
Самант канма вырнаҫнӑ ӑмӑрткайӑк—
Вӑл лӑпкӑн ҫеҫ асфальт ҫинче тӑрать.

Мӑнаҫлӑ вӑл, — эсир ӑна курасчӗ, —
Гастелло уйрӑлать кӑшт хурланса.
Халь ӗнтӗ вӑл — ҫӑмӑл бомбардировщик, —
Килкелӗп, тет вӑл вӑхӑт тупӑнсан.

Унӑн отрячӗ кӳршӗре вырнаҫнӑ.
Вӑл — командир. Вӑл час-часах унтан
Орлов патне килсе каять ир-каҫӑн, —
Тусӗсене манмасть-мӗн капитан.

Ку шӑматкун каҫвыртмаллах вӑл юлчӗ;
Тусӗсемпе калаҫмалли нумай.
Ҫуллахи каҫ тӳлек те лӑпкӑ пулчӗ:
Сӑмах та шурӗ вӑхӑт шунӑ май.

Вĕсем çемçе çерем çинче выртаççĕ.
Аэродром сывăхĕнчех вĕсем.
Чўхенкелет асамлă июнь каçĕ,
Хуллен кăна сунаççĕ çăлтăрсем.

— Тусăмăрсем, тĕнче тўпи пит çўллĕ.
Мĕн чухлĕ çул вĕçевçĕн уçмалла.—
Çўле пăхса çапла калать Гастелло,
Шухăшĕпе каять вăл малалла.

Эпир, тет вăл, тин çеç-ха сунатланнă,
Пирĕн ĕçсем халь пĕтĕмпех умра.
Валерий Чкалов, тусăмсем, шутланă
Вĕçсе тухма çĕр чăмăрĕ тавра.

Тусемпе тинĕссем, пур океансем урлă —
Вĕçевçĕн сулĕ вĕçĕмсĕр инçе.
Этем телейĕшĕн çул хыв, пилот, хăюллăн,
Этем телейлĕ пултăр çĕр çинче.

Хăш чух çапла шутлан та тĕлĕнетĕн:
Мĕн ĕмĕртен çĕрте таптаннисем,
Эпир, паян çўле, çўле çĕкленнĕ,
Пире паян — мухтавпала хисеп.

Унтан Гастелло çаврăнчĕ сасартăк
Орлов енне: — Чăваш ачи, кала:
Совет çĕршывĕ пулас мар-тăк,
Çак самантра ăçта эс пулмалла?

Эс халь, гигант караппала çўретĕн,
Эс сывлăшра çĕнĕ çулсем уçан.
Сан ĕмĕтсемшĕн чăрмав çук пĕрре те,
Ăçта пыратăн, эс унта хуçа.

— Эп хам та, — тет Орлов кăштах
хумханнăн,
Шутлатăп халĕ çавăн çинченех.
Эп тĕттĕм çĕрпӳртрен тухса хăпарнă
Çак пархатарлă çутă тĕнчене.

Ман халăх ĕмĕр мăшкăлра таптаннă,
Юмах кăна йăпатнă халăха.
Халь ак куран, эп те çынах, тăванăм,
Вĕçме те эп вĕçетĕп лайăхах.

— Çапла, Федот, çапла, юлташăм, тусăм, —
Гастелло тăчĕ, пăхрĕ тухăça.
Ĕнтĕ çĕкленнĕ çутă шурăмпуçĕ,
Ĕнтĕ çут ир хăй илемне уçать.

Инçе те мар самолётсем тăраççĕ.
Тӳлек те шăп аэродром çинче.
Çапла иртет июнĕн кĕске касĕ,
Ытла тӳлек пек туйăнать тĕнче.

— Çапла, Федот — тет Николай Гастелло, —
Анчах та çак телейлĕ пурнăçа
Сыхламалла. Ку вăл кашниншĕн паллă.
Тен, çакăншăн тухма лекет вăрçа.

Тăрать Гастелло. Паттăр улăп евĕр
Вăл курăнать çут шуçăм çуттинче.
Вăрçă ултавлăн килессе кĕтмесĕр
Çут тĕнчепе тăрать вăл киленсе.

Анчах хĕвел тухса ĕлкĕреймерĕ...
Кам килчĕ ку? Сасси хамăрăн мар.
Хура хĕреслĕ самолёт тискеррĕн
Пуç тăрринчех пуçларĕ явăнма.

Малтан ларма хăтланнă пек кăтартрĕ,
Явăннă май кăларчĕ шаççине.
Унтан сасартăк вут тăкма пуçларĕ
Тӳлек ларан самолетсем çине.

— Ниушлĕ вăрçă? Ку çăхан — разведчик?
Вĕçевçĕсем выртаççĕ çĕр çумне.
Гастелло çеç çил-тăвăл пек вĕçтерчĕ
Вут айĕнчи самолетсем патне.

Стрелок-радист кабинине вăл кĕчĕ.
Хурах пек явăнан çăхан çине
Кăларса ячĕ пулемёт черечĕ,
Вут тăкрĕ, печĕ лектеричченех.

Çăхан чĕтренчĕ, сывлăшра кисренчĕ,
Тарма шутларĕ, туртăнчĕ çӳле.
Унтан вара вăрахăн та хуллен çеç
Çăхан шăва пуçларĕ çĕрелле.

Ун çумĕнчен ав хăпрĕ тĕксĕм михĕ,
Çав михĕ сарчĕ симĕс парашют.
— Парашютпа сикесшĕн йытă йăхĕ,
Халь-хаççĕнех ун çук мĕн вилес шут!..

Çав ирсĕр йытă пулнă мĕн разведчик.
Алла лексессĕн, допроса çитсен:
— Кăтартăр, кам мана çапса ӳкерчĕ? —
Тесе вăл ыйтнă пирĕннисенчен.

Хăйне вăл питĕ сĕмсĕр тыткаланă;
Ун кантăк евĕр вилĕ куçĕсем
Хăйне ӳкернĕ харсăра шыранă, —
Шартах вăл сикрĕ капитан кĕрсен.
— Эп вĕçнĕ Франци урлă, Бельги çийĕн,

Эп пулнă аслă Лондон çийĕнче,
Анчах телей кӳмерĕ-мĕн Россия,
Вĕçленчĕ çул пĕрремĕш кунĕнчех.—

— Çитет, фашист!—ăна Гастелло пӳлчĕ.
Кантăк куççем те шăнчĕç самантах.
Пуçланчĕ вăрçă. Пирĕн çилĕ тулчĕ.
Çĕршывăмăр пуçтаранчĕ фронта.

Орлов та çакрĕ бомбă ярăм-ярăм
Тăват моторлă улăпĕ çине.
Тĕттĕм пулсан хăватлăн тухса карĕ
Тин çеç пуçланнă çапăçу хирне.

Халь Орлова сасартăк аса килчĕ
Тахçан, ыйткаласа çӳренĕ чух,
Ун аллине кулак пăрахнă чул.
Хĕврех пек вăл. Ăна алла эс ил те—
Тăшман пуçне пĕр шелсĕр çапса çур!

## 8. Гастелло ĕçĕ

Вăл аслă кун пулчĕ. Вăл кун ирхине
Çĕршывăм итлерĕ çулпуç сăмахне.

Çулпуçăмăр чĕнчĕ:—Туссем, тăвансем,
Вăрçа тухăр пурте карах çĕкленсе.

Пире сĕмсĕр нимĕç тăвасшăн чура,—
Аркатăр ăна юнлă çапăçура.

Пире хавшатаймĕ нимле йывăр çул,
Эпир—ирĕк халăх чура пулас çук.

Çакна пӗтӗм халӑх итлерӗ тӑрса.
Çав ир тухса кайрӗ Гастелло вӑрçа.

Кӗрлет ик моторлӑ хӑватлӑ хӑлат,
Гастелло çул тытрӗ фронт урлӑ тыла.

Çӗршывшӑн, çулпуçшӑн сыхла тивӗçе,
Пӗр шелсӗр вӗлер эс тискер нимӗçе.

Фашист вӑр-хурах пек килет çаратма,
Асса иртӗхмешкӗн ӑна парас мар.

Эпир тунӑ пурнӑç, ӗçленӗ хӗрсе,
Эпир тунӑ аслӑ цехсем, корпуссем.

Авал пуш-хир тӑрӑх çил чупнӑ çӗрте
Эпир тунӑ çутӑ телейлӗх çуртне.

Тин çеç çунат сарнӑ хӑюллӑ этем
Пӑхса çитӗнтерчӗ таса ӗмӗтсем.

Эпир никама та тивме шутламан,
Анчах килсе çапрӗ ултавлӑ тӑшман.

Паян çавӑнпа та Гастелло хаяр;
Пӗр шухӑш кӑна ун: çапар, аркатар!

Çапар, аркатар вӑр-хурах тӑшмана,
Тискер нимӗçе пултӑр вилӗм кӑна.

Ак бомбардировщик колонна курать,
Тӑшманӑн обозӗ таçтан тӑсӑлать.

Гастелло васкавлӑн унта çул тытать,
Анчах ӑна нимӗç часах асӑрхать.

Тăшман асăрхать те пеме тытăнать,
Сехри хăпнă нимĕç перет хыттăнах.

Гастелло та хирĕç вутпа вăтăрать.
Анчах, чим, мĕн пулчĕ хăрах мотора?

Тăшманăн снарячĕ лекрĕ тӳрех.
Машина кисренчĕ... çулăм кĕрлет!

Нумай шутламашкăн халь вăхăт та çук,
Калла таврăнмашкăн ытла вăрăм çул.

Сикес парашютпа — вара халь тинех
Пит çăмăл лекетĕн тăшман аллине.

Çук, паттăр Гастелло хăравçă çын мар,
Çĕршывшăн вăл хатĕр вутра та çунма.

— Çапах та, вăй-халăм, часах эс ан чак!
Вилсен те, çунсан та çĕршывшăн анчах.

Çапла шухăшларĕ Гастелло герой.
Ун шухăшне илтрĕ вăрман та хир уй.

Ĕçне унне курчĕ çĕршывăмçăм ман.
Вутне унне лайăх туганчĕ тăшман.

Çапах та, вăй-халăм, часах эс ан чак!
Вилсен те, çунсан та пĕр тупсăм анчах.

Çак шухăш çĕклерĕ герой чĕрине.
Гастелло çул тытрĕ колонна çине.

Пуçлать вăл колоннăн кайри вĕçĕнчен,
Вут-çулăм хӳриĕ шăвать хыçĕнчен.

Машина-комета шăвать те шăвать,
Вут хыпнă бензин баксенчен сапăнать.

Вăраннă хаярлăх, вут-çулăм хӳри
Тăшманшăн — хăрушă, тăшманшăн — вĕри.

Гастелло пĕр шелсĕр шăвать те шăвать,
Ун хыççăн хăватлă вут йĕрĕ юлать.

Пур автоцистерна, бензин пичкисем
Сиксе сирпĕнеççĕ герой пынăçем.

Шартах шартлатаççĕ снаряд-бомбăсем,
Машина-комета вут-хĕм тăкнăçем.

Çĕршывшăн, çулпуçшăн сыхла тивĕçе;
Пĕр-шелсĕр вĕлер эс, пĕтер нимĕçе.

Вĕçленчĕ колонна, малта ав танксем.
Машина-комета, унта эс çитсем!

Мĕнле вăй-хăват халь чарайтăр ăна!
Гастелло çитет те унта тăрăнать.

Танксем сирпĕнеççĕ, çурлаç снарядсем.
Вутра вĕтĕнеççĕ çĕлен-калтасем.

Герой аçа-çиçĕм пек çĕр çĕмĕрет.
Гастелло-комета кĕрет ĕмĕре.

Кунсем çиçсе иртĕçĕ, иртĕ пин çул,
Гастелло чĕри нихăçан сӳнес çук!

## 9. Ку — тавăру каçĕ мар-ха...

И если капитан Орлов
Летит в туманной мгле,
Его карающая тень
Проходит по земле.

Мих. Матусовский.

Ирхине Информбюро пĕлтерчĕ
Çулăмлă кĕске хыпар фронтран.
Улăп пек тĕнче умне çĕкленчĕ
Николай Гастелло, капитан.

Çав хыпар Федот Орловшăн пулчĕ
Çурхи вăйлă аслати пекех.
Ун чĕри хаярлăхпала тулчĕ, —
Куççуле хаярлăх типĕтет.

Çапăçма чĕнет Гастелло ячĕ.
Ун кăварĕ — пирĕн чĕрере.
Орлов хăйĕн отрядне пуçтарчĕ:
— Тавăрма каятпăр кĕçĕрех!

Куçĕнче ун — пĕрмаях Гастелло,
Ун сăнарĕ, унăн ĕçĕсем.
Унăн пĕвĕ улăп пек хăй тĕллĕн
Ӳсĕнет чĕр шухăш ӳснĕçем.

...Халь кăначчĕ питĕ лăпкă каçчĕ,
Вăйлă тăвăл тухрĕ ирхине.
Капитан çав ир персе антарчĕ
Фашистсен пĕрремĕш çăханне.

Ун чухне Гастеллăна каларĕç:
— Аллу çăмăл пултăр, капитан!
Эс пуçартăн тĕрĕс те хаяр ĕç,
Пирĕн çилĕ пырĕ санпа тан.

Эс татах та чаплӑрах ӗç турӑн,
Вилӗмсӗр учитель, командир.
Сан ятна асра тытса, сатуррӑн
Тӑшмана аркатӑпӑр эпир.

— Хатӗрленӗр, бомба ан хӗрхенӗр! —
Орлов пачӗ отряда приказ. —
Фашистсемшӗн кӗçӗр çӗр кисрентӗр,
Тамӑкри пек çунса тӑтӑр каç.

Ак Орлов та Локтионов, Сушин
Виçӗ паттӑр — виç самолетпа,
Тухса кайрӗç — командиршӑн, тусшӑн
Тӑшмана пӗр шелсӗр аркатма.

Паттӑрсем фронт урлӑ çул тытаççӗ.
Тӳперен пӑхатӑн та — çӗрле
Пирӗн чаплӑ хуласем çунаççӗ,
Вӑрçӑ пӗтӗм таврара кӗрлет.

Ой, çӗршыв, сана эпир ӳстернӗ,
Пайтах тӑкнӑ саншӑн юнпа тар.
Килсе тапӑнчӗ тӗнче эсрелӗ,
Нимӗç кӳчӗ вилӗм те пушар.

Улӑпсем пек хуласем вилеççӗ,
Тӑшманпа хаяррӑн çапӑçса.
Анчах пирӗн хуласен тивлечӗ
Ӗмӗр юлӗ çутӑ та таса.

Çав тивлетшӗн, ирӗклӗхшӗн, чысшӑн
Виличчен тӑма сӑмах парса,
Ак Орлов та Локтионов, Сушин
Тухрӗç çакӑ çӗрлехи рейса.

Виçĕ тусăн, виçĕ капитанăн
Кăкăрта çунса тăрать пĕр ят.
Вăл Гастелло ячĕ — чĕр суранăн
Кашниннех чĕри çинче выртать.

Ак вĕсем тĕллев патне тухаççĕ.
Аялтан чĕнмеççĕ халлĕхе.
Тăшман шăппăн пытанса юласшăн
Çĕре сăхса выртнă сĕлĕх пек.

Нумаях тӳсейĕн-ши эс, сĕлĕх,
Шарламасăр, —
Нимĕç нервине
Çиелтен тĕрĕслесе пĕлмелĕх
Орлов ярса пăхрĕ бомбине.

Çĕр чĕтренчĕ. Юрĕ, начар мар ĕç!
Мĕн хăтланăр-ха тепрер лексен?..
Ак хайхи йытла вĕрме пуçларĕç,
Вут хăсса тăшман зениткисем.

Ме эппин татах! Пуçу кисрентĕр!
Нерву санăн курăпăр мĕнле!
Хыпашлать ак вун-вуник прожектор
Тӳпене тискер эрешменле.

Ялкăшать çĕрте халь ĕнтĕ çулăм,
Ялкăшаççĕ ориентирсем.
Вилĕм çеç ташлать ĕнтĕ хăюллăн
Тăшмана çĕрпе, вутпа ирсе.

Йĕркерен прожекторсем сӳнеççĕ.
Çутатать пушар çеç таврана.
Летчиксен хаяр та селĕм ĕçĕ
Ал лаппи çинчи пек курăнать.

Нимĕççемшĕн çитрĕ тамăк касĕ,—
Такăр çул сире леш тĕнчене.
Паттăрсем çӳлтен пăхса шутлаççĕ
Çулăм хыпнă самолетсене.

Хисеплеççĕ, татах вут тăкаççĕ,
Пĕт эс, нимĕç, вĕтĕнсе хутлан.
Фашистсен машинисем çунаççĕ
Çĕр çинче пĕр утмăл таытла.

— Кур, Гастелло! Эпир, тусăм, саншăн
Çутрăмăр çав çут çуртасене.
Халлĕхе ку пултăр-ха пуçламĕшĕ,
Вĕчĕ кăмăл малалла чĕнет.

Тăкăр бомба! Вирлĕнрех пăрахăр!
Тоннăшарăн тăкăр пĕр тăрук!
Ку вăл халĕ тавăру касĕ мар-ха,
Ĕмĕр пырĕ хаяр тавăру!

## 10. Хаярлăх ӳсет

Çиллĕ-тăвăллă, урнă çанталăк,
Йĕп чиксен курăнми тĕттĕм каç,—
Кун пек чух вĕçеймест нимле кайăк,
Йăваран та тухма хăяймасть.

Каç тени тем пек ырă пулсан та
Сахал кайăк вĕçет-çке çĕрле.
Анчах тватă моторлă гигантăн
Пурпĕрех, пурпĕрех вĕçмелле.

Чараймасть ăна чăрсăр çанталăк,
Ăна вутлă хаярлăх чĕнет.
Пирĕн паттăр Орлов—ăмăрткайăк
Тăвать хăйĕн хăюллă ĕçне.

Тĕтре витĕр, мазут пек каç витĕр,
Çăмăр çуви чухне шарлатса,
Орлов кирлĕ çĕре вĕçсе çитĕ,
Ĕçе кĕртĕ çапах приказа.

Тăшмана пуçĕпех аркатмасăр
Çурма-çул — унăн тивĕçĕ мар.
Темĕнле тăвăлран та вăл харсăр,
Темĕнле çиçĕмрен те хаяр.

Çăхансем пур енчен хупăрлаччăр,
Çапăçать вăл, тухать, çăлăнать.
Хăй учителĕн вилĕмсĕр ячĕ
Çутатать ун çулне яланах.

Сывлăшра ала вăйĕ пĕтет-и,
Аманать-и гигант — аппарат.
Унта паттăр Гастелло çитет те
Орлова вăхăтра вăй парать.

Куç умне сĕмсĕр вилĕм тăрсан та,
Пур çĕрте те Гастелло пĕрле.
Пĕринче Орлов ака ăсанчĕ
Хăй ĕçне яланхи пек çĕрле.

Фашистсен йăвине ку расра та
Арпаштарчĕ Орлов тĕпренех.
Анчах ун пĕр моторĕ сасартăк
Вăйлăн тытăнчĕ тем кисренме.

Сывăхрах снарядсем çурăлаççĕ
Улăпа çулăм хумĕ силлет.
Тĕп пулма та пулать, ыйăхла çеç, —
Хăвăртрах кил енне вĕçмелле.

Анчах ваннă мотор уссăр грузăн
Улăпа çĕреллех сĕтĕрет.
— Çирĕплен, паттăрлан, улăп тусăм,
Хамăр çĕр çинелле çитерех.

Çакна акă Гастеллăмăр курнăн
Орлова вăйпа шанчăк кӳрет.
Хăйĕн самолетне вăл фронт урлă,
Ӳкиччен, каçарса ĕлкĕрет.

Çак машина — вăл пулнă Гастеллăн, —
Çавăнпа, тем пулсан та, ăна,
Куç умне тухса тăтăр хăть вилĕм,
Сан пама юрамасть тăшмана.

Çук, вĕçевçĕ ăна пăрахмарĕ;
Вăл ăна хăвăртрах юсаса,
Черетри вĕçеве тухса кайрĕ,
Ĕлкĕртме черетри приказа.

Вĕç, вĕçевçĕ, хăюллă юлташăм,
Машину улталамĕ сана.
«Голубая двойка» — тăшманшăн
Тӳперен кӳрет вилĕм кăна.

Кĕçĕр пирĕн разведка пĕлтерчĕ:
Нимĕçсем пĕр тӳлек станцире
«Хурçă чăмăр» пухса хатĕрлеççĕ,
Систермесĕр çапасшăн пире.

Станцине эшелон çитсе ларнă,
Бензин хатĕр ыран нимĕçсен.
Çитсе çап-ха, Орлов, вут-кăварлăн,
Аçа-çиçĕмĕн çит эс вĕççе.

Приказ илнĕ Орлов. Уншăн паллă:
Питĕ йывăр задача умра.
Çапмалла çĕрпеле танлашмаллăх
Хурçăран пухнă çав «чăмăра».

Тухса кайрĕ Орлов каçа хирĕç,
Станцине çитрĕ шăп тĕттĕмле.
Кĕтсе илчĕ ăна хайхи нимĕç
Пĕртте кăмăллă мар темелле.

Ирсĕр нимĕç йăлтах урса кайрĕ,
Вăл пуçларĕ татах вут сапма.
Анчах пирĕн те пур-çке хаярлăх, —
Мĕншĕн вут çине вут тăкас мар!

Пĕрре кĕчĕ, кĕчĕ вăл иккĕ —
Орлов хăйĕн «тĕллевĕ» çине.
Эшелон ав чун кĕнĕ пек сикрĕ,
Çулăм сапăнчĕ шăп тӳпене.

Ме, тăшман! Çулăм санăн тусу вĕт.
Хăв эс килтĕн, вутпа чи малтан.
Акă халь тапса тухрĕ Везувий
Аслă çĕр ăшĕнчен, чи шалтан.

Тӳперен Орлов пăхрĕ мăнаçлăн
Хăй хускатнă Везувий вутне.
Ĕнтĕ кăмăлĕ унăн вырнаçрĕ
Ĕнтĕ турĕ вăл хăйĕн судне.

Пăхса çаврăнчĕ летчик вăрахăн:
Хăш таран сарăлать чăрсăр вут?
Анчах ку тавăру каçĕ мар-ха,
Ĕмĕр пырĕ хаяр тавăру.

Кун пек тамăк халь пулĕ пин хут та,
Тăшман хăй шырать çав тивĕçе.
Ирхине хайхи пирĕн пехота
Пырса çапрĕ кунта нимĕçе.

Фашистсен çапла шăпăрт бензинсăр
Тăрса юлнă тискер танкĕсем
Пулаймарĕç чарусăр та сĕмсĕр,
Вырăнтах вĕсем ларчĕç сĕнксе.

Тăшмана боецсем сирсе ячĕç,
Танксем лекрĕçĕ пирĕн алла.
Тăван халăх ывăлĕн ячĕ
Фронта сарăлчĕ вут-çулăмла.

Янăра, пирĕн аслă хăюлăх,
Çиçĕмле ывтăн нимĕç çине!
Çапла паттăр чăваш — çĕнĕ улăп
Парать хăйĕн сатур сассине.

## 11. Гастелло самолечĕ пурăнать

Бомба хыççăн бомба ăсатăр —
Ăçта нимĕç юнпа çул хывать.
Паттăрсем, çирĕп тăрăр, тасатăр
Нимĕç ирсĕрĕнчен çĕршыва.

Ав татах юханшыв урлă нимĕç
Вăй пухса хатĕрленнĕ каçма.
Орлов тухрĕ унта ăна хирĕç —
Тăшманпа бомбăпа калаçма.

Юханшыв çăра пулă шÿрпи пек
Вĕреме тытăнсан вутпала,
Орлов лăпкăн каларĕ: — Халь çитĕ.
Ĕнтĕ халь килелле каймалла.

Вĕçтерет базăна вăл хавассăн,
Темле юрă хăй тĕллĕн юрлать.
Анчах база патне çывхарсассăн
Ырă мар япала асăрхать.

Çывăхра çăхансем явăнаççĕ,
Явăнаç вут та хĕм сирпĕтсе.
Аэродром ăçтине ухтараççĕ
Сĕмсĕр ĕмĕтлĕ «Мессершмиттсем».

Орлов сисрĕ çакна, асăрхарĕ,
Кун пек чух çĕр çине анма çук.
Нимĕç сĕмсĕр. Эпир чее мар-и!
Чее мар-и эпир кун пек чух.

Тăшмана систерес мар тесессĕн,
Палăртас мар тесен базăна,
Инçерех вĕçсе кай, тусăм эсĕ,
Тен кайран мĕнле пулĕ—сăна.

Çавăнпа та Орлов иртсе карĕ
Хăйĕн хаклă, тăван базинчен.
Тĕрĕслерĕ:—Бензин сахал мар-и?
Пит сахал, вĕçме çуккă инçе.

Вĕçме çуккă инçе. Хупăрланă,
Кĕрхи каç хупăрланă çĕре.
Çăмăл мар, çăмăл мар-çке, тăванăм,
Летчик пурнăçĕ çут тĕнчере.

Ăçта ларăн ĕнтĕ арканмасăр,
Йĕп чиксен курăнмасть кĕрхи каç.
Çăхансем çывăхран тасалмасăр
Базăна таврăнма юрамасть.

Тăван база! Унта юлташсем-çке,
Вĕсене юрамасть палăртма.
Тĕрĕс шухăш тупасшăн вĕçевçĕ,
Анчах шухăшлама вăхăт мар.

Бензин вунă минутлăх çитет-и...
Çĕрте тĕттĕм. Çĕре анма çук.
Тем шуйттан майракийĕ çине те
Тăрăнма пултаран кун пек чух.

Çавăнпа вилĕмрен çăлăнмашкăн,
Наставлени кĕскен хушнипе,
Парашют тăхăнса экипажăн
Çĕрелле сикмелле ушкăнпех.

Наставлени... Анчах та машинăн
Мĕншĕн, мĕншĕн ӳксе вилмелле?
Миçе хут вилĕмрен вăл хăй çăлнă
Тĕрĕс-тĕкĕл çитерне киле!

Тата ку вăл—Гастелло парнийĕ,
Тват моторлă хăватлă гигант.
Мĕн чунпа ăна кӳрĕн эс вилĕм?
Çук, сутаймĕ ăна халь никам!

Орлова чĕри çирĕп каларĕ:
Самолет чĕрĕ, сывă юлать.
Халь кунта та Гастелло кăварĕ
Орлова пачĕ паттăр хăват.

Орлов тусĕсене приказларĕ:
— Сикĕр те вырăн тупăр ларма.
Вырăн тупăр, çĕртен сигнал парăр,
Вăхăт юлчĕ вĕçме нумай мар.

Экипаж çакна хăвăрт ăнланчĕ,
Çынсем чăмрĕçĕ тĕттĕмелле.
Самолет теме туйнăн хумханчĕ,
Ĕнтĕ унăн сигнал кĕтмелле.

Орлов юлчĕ пĕччен. Хупăрланă,
Кĕрхи каç хупăрланă çĕре.
Çăмăл мар, çăмăл мар-çке, тăванăм,
Летчик пурнăçĕ çут тĕнчере.

Моторсем юлашки хут çăтаççĕ
Пĕтсе ситнĕ тумлам бензина.
Çĕр çинче хайхи çулăм çуталчĕ,
Ĕнтĕ шанчăк хĕлхемĕ çунать.

Хыттăн тапрĕ Орловăн чĕрийĕ,
Ĕнтĕ акă çĕре вăл анать.
Хирĕç çапрĕ чĕр сывлăш хĕрӳллĕн,
Чаплă улăп ĕнтĕ пурăнать.

Пĕчĕккеççĕ «У-2» вырнаçмалăх
Ансăр, ансăр пĕр лаптăк çине
Анса ларчĕ гигант-ăмăрткайăк,
Бензин пĕтрĕ çĕре çитсенех.

Тăван çĕр! Иксĕлми тăван çĕрĕм!
Орлов выртрĕ, чуптурĕ ăна.
Паттăр улăп Гастеллăмăр чĕрĕ,
Вăл Орлов чĕринче пурăнать.

## 12. Мускавшăн!

Кĕрхи тĕксĕм кунсем.
  Ишнĕ, ишĕлнĕ сасă.
Çăмăр мар ку çăвать,

тĕшĕрет çĕршыва.
Ку вăл вут та тăхлан,
пĕр самант чарăнмасăр,
Талăк-талăкĕпе
юнпа хутăш çăвать.

Умлăн-хыçлăн снаряд
ўксе çурăлнăçемĕн
Ахлатса аманать
тăван çĕрĕн кăкри.
Ăçта пăхнă, унта
тўрленми сурансем пек
Шăтăксем хуралаç.
Çĕр суранĕ вĕри.

Кассăн-кассăн вара
чăн-чăн çăмăр килсессĕн,
Тăван çĕр асапне
тўперен курнипе,
Ĕмĕрхи суттĕнче
мăшкăла тўсеймесĕр,
Туйăнать ачаллах
кўтсе макăрнă пек.

Çут тĕнче макăрать.
Анчах халăх куççулĕ
Ĕнтĕ пулнă типсе
тахçанах вутлă тар.
Тахçанах ун чĕри
пулнă çирĕп вут чулĕ.
Ун пĕр ĕмĕт кăна:
— Тăшмана аркатар!

Тăшмана аркатар!
Выçă куç—урнă нимĕç,

Чыхӑнса, антӑхса
  хӑйӗн юнӗпеле,
Малаллах талпӑнать,
  ывтӑнать вута хирӗҫ,
Юн хӑссах ывтӑнать
  вӑл Мускав ҫинелле.

Броньӑланӑ ҫамка,
  чи усал тискер кайӑк,—
Ун пек ӗмӗтсӗре
  ҫуратман ҫут тӗнче.
Ҫав хӑрушӑ ҫӗлен
  малалла шунӑ майӑн
Юнлӑ, пылчӑклӑ йӗр
  сӗтӗрнет хыҫӗнчен.

Чармалла тискере!
  Ҫапӑр сулӑмлӑн хирӗҫ!—
Асатте-аттесен
  аслӑ ҫӗрӗ чӗнет.
Хуҫмалла нимӗҫе!
  Нихӑҫан ирсӗр нимӗҫ
Ан сӗмлентӗр кӗмешкӗн
  ҫӗршыв чӗрине.

Ҫӗршыв ывӑлӗсем
  кӑкӑрпа кар тӑраҫҫӗ.
Вил те тӑр эс, ан чак,
  вырӑнтан ан хускал!

Арӑмсем, ачасем
  пире чун пек шанаҫҫӗ.
Йӗкӗтсемӗр, хыҫра
  пирӗн пурнӑҫ—Мускав.

Ахăрать, пăтранать
  лăпланми вăрçă вучĕ,
Хыпса илнĕ çав вут
  пĕтĕм çĕр чăмăрне.
Тӳсеймест çав вутра
  нимĕнле тимĕр-хурçă,
Тимĕр кăвăрчă пек
  вĕтĕнсе пĕтĕрнет.

Вăрçă вучĕ хаяр.
  Çапăçу уйĕ-хирĕ
Тутăх-çунăк танксен
  купипе витĕнет.
Этем çеç-мĕн тӳсет.
  Хурçăран та вăл çирĕп.
Нимĕнле хаяр вут
  витеймест этеме.

Ку вăл пирĕн этем,
  пирĕн улăп пек воин,
Вăл хăюллăн тухать
  танка хирĕç пĕччен.
Вĕçĕ çук, виçи çук
  унăн вилĕмсĕр вăйĕн,
Çапăçать вăл тăрса
  юлашки сывлăшчен.

Витĕр пуля тухать.
  Вăл çапах та пĕр хушă
Ӳкеймесĕр тăрать
  е чупать малалла.
Урараи ӳкиччен
  вăл тăшманшăн хăрушă,
Вăл асамлă вăй пек
  тăшмана хăвалать.

Вырăс çынĕ çинчен
авалах-çке каланă:
Ураран ÿкиччен,
вăл вилсен те вилмен.
Эпир тухнă вăрçа
вырăспа пĕр тăванăн,
Эпир тухнă вăрçа
вилме мар, çĕнтерме.

Тăшман вилĕм курать,
Çавăнпа та урсах вăл
Аркатма талпăнать
пирĕн аслă çара.
Мĕнпур пек танкĕнчен
пуçтарса хурçă савăл,
Тăшман пирĕн çине
умлăн-хыçлăн ярать.

Ав килет аллă танк.
Çирĕм сакăр гвардеец
Çав тискер кĕтĕве
хирĕç тăчĕç карах.
— Тăван çĕршĕн, ачсем,
çирĕп тăрăпăр, терĕç,
Пирĕн урлă каçаймĕ
фашист—вăр-хурах!

Диев тăчĕ кунта.
Хурçă пек çирĕп саслăн
Вăл каларĕ çапла
танксем килнĕ чух:
— Тăвансем те туссем,
Российйăмăр аслă,
Анчах пирĕн чакма
хыçра урăх çĕр çук!

Чакма урăх çĕр çук!
  Ĕмĕр юлĕ çак сасă.
Илтсе тăрĕç ăна
  халăхсем пиншер çул.
Ак пуçланчĕ вара
  чĕп-чĕр юнлă та харсăр,
Тĕнче ĕмĕр курман
  тытăçу.

Фашистсем малалла
  каяймарĕç пĕр утăм.
Этем пулчĕ кунта
  хурçăран çирĕпрех.
Эсĕ, аслă çĕршыв,
  ывăлусене куртăн,
Вĕсем пулчĕç кунта
  улăпсемпе пĕрех.

Юлашки сывлăшчен
  Диев тăчĕ:—Тĕпретĕр!
Вĕсем ӳкрĕç,
  сутмарĕç Россия çĕрне.
Анчах ирсĕр шакал—
  çурма ăслă ефрейтор
Хăвалană çаплах
  хăйĕн пыйтлă çарне.

Çаплах илĕртнĕ вăл:
  — Мускавра пулĕ канăç,
Пулĕ чаплă уяв,
  ĕçкĕ-çикĕ, парад.
Çук, суятăн, эсрел!
  Мускава сана памĕç!
Мавзолей çинче Сталин
  боец пек тăрать.

Кунта пирĕн парад.
Хĕрлĕ Çарăн парачĕ.
Тимĕр юхăм шăвать
фронталла, малалла.
Вĕç-хĕррисĕр полксем
хурçă ретĕн пыраççĕ,
Аслă Сталин çулпуç
вĕсене саламлать.

— Çул кăтарттăр сире
Аслă Ленин хăвачĕ!
Вăйхал кӳрччĕр сире
аслă асаттесем!—
Сталин чĕнчĕ пире,
çĕнтерме приказ пачĕ:
— Чап та чыслăх сире,
тăшмана çĕнтерсен.

Акă тухрĕç вара
Тăван çĕршĕн, Мускавшăн
Çĕршыври халăхсен
паттăр ывăлĕсем:
Вырăспа юнашар
белорусĕ, чăвашĕ—
Пурте, пурте пĕрле
вăрçа тухрĕç вĕсем.

Танксен хурçă полкне
васкатать Винокуров
Тăван çĕршĕн, Мускавшăн
малтан малалла.
Тӳпере—истребитель
Васильев сатуррăн
Çăхансен ушкăнне
хăвалать.

Сывлăшран та çĕртен
  çунтараççĕ хĕрўллĕн,
Пĕр саманг та кунта
  канăç çук тăшмана.
Пирĕн паттăр гвардеец
  тутар Габайдулин
Миномет вучĕпе
  фрицсене ăшалать.

Вăрçăн аслă турри—
  ывăнми артиллери
Сăптăрать нимĕçе,
  çĕр алтсах пытарать.
Ку вăл Лаптев ĕçлет.
  — Хытăраххăн ĕçлер-и!—
Тенĕ сасă çĕклет
  хал пĕтен паттăра.

Çап, хăюллă чăваш,
  Пухтел ывăлĕ Лаптев!
Винокуров, кăтарт,
  Шупашкар хăватне!
Çап, Васильев, çунтар,
  чăваш пек пурте çапчăр!
Габайдулин, çўлте
  тыт тутарăн ятне!

Тинĕсрен—тинĕсе
  кĕрлет çулăмлă вăрçă,
Хуть ăçта та пĕрех,
  Эс тăван пĕр ĕçе.
Мускава хўтĕлен,
  юн тăкан тăван çĕршĕн,
Тăван çĕршĕн шаккан
  нимĕçе.

Хура тинĕс ҫинче
  Элĕк ывлĕ Ефимов
Штурмовикпе ҫӳрет
  чӑн аҫа-ҫиҫĕмле.
Тӑшмана кун памасть
  Ун хӑватлӑ вут-хĕмĕ;
Вӑл ҫапла ҫĕршыва,
  Мускава хӳтĕлет.

Чӑваш ывӑлĕсем!
  Чӑваш ҫĕрĕ ӳстернĕ
Геройсем-улӑпсем,
  вӑрҫӑр паттӑррӑнрах!
Ав танксем, составсем
  вĕҫ-хĕррисĕр цистерна
Орлов вучĕпеле
  арканса пӑтранать.

Юлашки сывлӑшчен
  тӑван ҫĕршĕн, Мускавшӑн
Тӑшманпа ҫапӑҫас
  халӑх ывӑлĕсем.
Вырӑспа юнашар
  белорусĕ, чӑвашĕ—
Пурте, пурте пĕрле
  вӑрҫа тухнӑ вĕсем.

Совет ҫĕрĕ ҫинче
  аслӑ халӑх ҫĕкленнĕ,
Юмахри улӑп пек
  сикленми паттӑр Ту.
Ҫапла пулчĕ
  Мускав патĕнчи наступлени,
Ку пуҫланчĕ хаяр
  аркату.

## 13. „Кӑвак дивизи“

Хӑш чухне вӗҫевҫӗн ӗҫӗ—
Мыскараллӑ япала.
Темӗнле «Кӑвак дивизи»
Ҫитнӗ, терӗҫ, пӗр яла.

Мӗнле ҫар вӑл? Мӗн амакшӑн
Килнӗ пирӗн ҫӗршыва?
Мӗн шырать вӑл, мӗн тупасшӑн?
Тата мӗншӗн вӑл «кӑвак?»

Орлова штаба чӗнтерчӗҫ;
Ӗҫ пырать кунта кал-кал.
— Ҫавсене кӑшт тӗрӗслесчӗ,—
Терӗ пирӗн генерал.

— Ӑнланан, Орлов, хӑвах эс,
Мӗн пирки сӑмах пырать:
Чӑнахах-и, кӑваках-и?
Кӑвак мар-тӑк, кӑвакарт.

Ҫав дивизи килнӗ имӗш
Хай Испани ҫӗрӗнчен.
Шӑлса пухнӑ ӑна нимӗҫ
Мӗнпур пек хупахсенчен.

Йӗксӗксем ҫурран танккана,
Тунӑ питӗ пысӑк марш.
Вӗсене халь кирлӗ «канӑҫ»,
Мӗншӗн «канӑҫ» парас мар!

— Хатӗрлен, Милостивенко,—
Орлов чӗнчӗ штурманне.—
Эпӗ карапа тием-ха,
Тием вырӑс «кавӑнне».

Леш «кăваккисем» халь путнă
Питĕ тутлă ыйăха.
Халь те тутлă, тата тутлă,
Тата тутлă пулĕ-ха.

Таçтан летчикăн вăраннă
Çак «линкка-линкка» кĕвви.
Çав юрра юрланă майăн
Сисĕнмен те хĕл сивви.

«Вăрăм çулра ырнă хыççăн
Сире канăç кирлĕ.
Юрĕ, юрĕ, пырса хыçăп,
Канăç пулĕ вирлĕ.

Сивĕре пит ĕнтĕркерĕн—
Ăшăнма вут ырă.
Ытлашши нумай кĕттермĕп,
Вут тиесе пырăп».

Лешсем тутлă ыйăх витĕр
Çак кĕвве паллах, илтмен.
Вырăс шартлама сивви те
Вĕсене пўртре витмен.

Халь вĕсемшĕн—вырăс ан кил,
Ан татах ыйхисене.
Тĕлĕкре çап-çутă ангел
Ачашланă вĕсене.

Анчах «ангел»—тват моторлă,
«Голубая двойка» вăл!
Кĕрлесе каçать фронт урлă,
Çĕклет вăйлă çил-тăвăл.

Ку—Гастелло самолечĕ,
Ăна пĕтĕм фронт паллать.
«Голубая двойка», теççĕ,
Вĕç сатуррăн малалла.

Хăш чухне вĕçевçĕн ĕçĕ
Чиперех тĕлĕнтерет:
Çĕр çинче—«Кăвак дивизи»:
«Кăвак двойка»—тӳпере.

Çитменне тата тӳпи те,
Каçĕ, юрĕ те кăвак.
Кăн-кăвак çанталăк витĕр
«Кăвак двойка» çул хывать.

— Ну, мĕнле Милостивенко?—
Орлов ыйтрĕ штурмăнран.
— Тĕллеве кăшт çитеймен-ха,
Çапла тӳр тыт, капитан.

Ответ пачĕ çамрăк штурмăн,
Вăл нихçан та йăнăшман.
Унпала ĕçре шар курмăн
Эс, юлташăм капитан!

Орлов хăй те питĕ лайăх
Тавçăрать кунти çула.
Çĕрлехи çак ăмăрткайăк
Кунта вĕçнĕ-çке чылай.

— Эх, декабрь питĕ капăр,
Штурман, пăхсам çĕрелле.
— Капитанăм, сывхаратпăр,
Ял çине халь кĕмелле.

Моторсем çакна ăнланнăн
Пусараççĕ кĕрлевне.
Самолет хайхи вăрахăн
Шăвать лăпкă ял тĕлне.

Çĕр шăпах. Пĕр чĕрĕ чун та
Çук пек пĕтĕм тĕнчере.
Вилĕм тĕсĕ çапнă чăн та
Тăшман пуснă çак çĕре.

Кăн-кăвак тăрать çанталăк,
Кăн-кăвак тăрать тӳпе.
Ăсатать Орлов малтанлăх
Пилĕк бомба йĕркипе.

Ответ çук-ха. Бомбăсем çеç
Çурăлаççĕ, кĕрлесе.
Вулккан тапнăн çĕр кисренчĕ,
Тăр-чĕтренчĕç çăлтăрсем.

Çĕр çинчен ответ памаççĕ.
— Çап-ха, тусăм, вăйлăрах!
Летчиксем хайхи анаççĕ
Кăшт тата аяларах.

— Ăшала, Милостивенко!
«Кавăн» пултăр тутлăрах.
Чăн-чăн «кавăн» астивмен-ха
Çавă пыйтлă вăр-хурах.

Капитан Орлов ял çийĕн
Çаврăнать те çаврăнать.
— Курăр, ак сире Россия,
Çийĕр пирĕн «кавăна»!

— Тутă пулăр, лăк тăранăр,
Ӳлĕм ан ыйтăр вара!—
Йĕксĕксем хайхи вăраннă
Чупкалаççĕ çулăмра.

Ялкăшать ялта вут-çулăм,
Хайхи пыйтлă йытăсем,
Хӳрисем айне вут хунăн,
Вăркăнаççĕ ĕрĕхсе.

Орлова кино пек ĕнтĕ
Курăнать çак тамаша.
— Пулеметсенчен халь ĕнтĕр,—
Вăл хушать экипажа.

Акă харăс юрра ячĕç,
Вĕсен пурин те пĕр сас:
— Акă вырăссен апачĕ—
Ăшалансă тип пăрçа!

Орлов ăшĕнче вăранчĕ
Авалхи мунча юрри:
— Пыйтисем шалт ăшаланччăр,
Мунчи пултăр-и вĕри!

Çат-çат, çат-çат,
Епле милĕк çыпăçать
Çат-çат, хытăрах.
Чĕре патне пытăрах!

Çат-çат та çурăмне,
Пыйти-шăрки—лапкайне.
Фрицсене, хурахсене
Ăсатар леш тĕнчене.

Нумайччен Орлов ҫӳрерӗ
Кӗрлесе ҫак ял ҫинче.
Яланхи пекех ӗҫлерӗ
Ҫамкине тар тухиччен.

— Ну, мӗнле, юлташӑм штурмӑн,
Каймалла пуль килелле?!
Леш кулать:—Пӗр бомба пур ман
Ӑна таҫта чикмелле.

Ун валли юлмарӗ вырӑн
Вутпа хыпнӑ ҫӗр ҫинче.
— Вырӑн тин ӑҫта-ха шырӑн.
Вӑркӑт, ан тӑр хӗрхенсе!

Ялкӑшать декабрь каҫӗ,
Тӗпӗнче ун—вут кӑна.
Ирхине кӗрсе каяҫҫӗ
Боецсем атакӑна.

Боецсем чунтан ырлаҫҫӗ
Кӗҫӗрхи вӗҫевҫӗне.
Ял патне ҫитсен кураҫҫӗ
Унӑн витӗмлӗ ӗҫне.

Килсе ҫапнӑ та хаяррӑн,
Кисрентернӗ вӑл ҫӗре.
Сехри хӑпнӑ йытӑ ҫарӗ
Тухса чупнӑ йӗмсӗрех.

Ӑшталаннӑ. Хӑшӗ путлӗн
Ыйхӑран та вӑранман.
Хӑшӗ пирӗн пата чупнӑ.
Хӑшӗ чупнӑ вӑрмана.

Анчах вăрçăн шав пĕр юрă—
Пĕт, тăшман, эс пĕтĕмпех!
Кăн-кăвак—декабрь юрĕ,
Кăн-кăвак—ирхи тӳпе.

Боеца боец каларĕ:
— Ак ĕнтĕ куран хăвах,
Фашистсенĕн «кăвак çарĕ»
Шăнса хытнă кăн-кăвак.

Кăвак юр çинче выртаççĕ
Кăвакарнă йĕксĕксем.
Халь «кăвак» ята тытаççĕ
Чăн тивĕçлипех вĕсем.

Тăшман пĕттĕр те çухалтăр,
Ĕçе Орловла тăвар.
Пирĕн пысăк генерал та
Пит ырларĕ Орлова.

— Пит аван Орловăн ĕçĕ,—
Терĕ вăл кулкаласа.
Кăвак марччĕ çав дивизи
Халь кăвак та... тап-таса.

## 14. Вырăс хăярĕ

Хирĕ пирĕн—çивчĕ куçлă,
Пин хăлхаллă—сĕм вăрман.
Тăшман утăм ярса пуснă—
Ана сиснĕ партизан.

Кaç пулсассăн хыпар çитрĕ
Хамăр партизансенчен:
— Ĕç пур кĕçĕр, хÿхĕм пит те,
Авалхи Н. хулинче.

Самант меллĕ-çке ытла та
Ун пекки часах ан кĕт,
Нимĕçсем тума шутланă
Раштав ячĕпе банкет.

Авалхи дворецăн залĕ
Ÿсĕр музăкпа кĕрлет.
Пĕтĕм ирсĕрĕ-усалĕ
Кĕçĕр пухăннă пĕрле.

Варрине çут чăрăш лартнă,
Çимĕçсем сĕтел тулли.
Сахал мар, вĕсем çаратнă,
Çав ĕнтĕ вĕсен йăли.

Савăнать, çиет мур-нимĕç.
Анчах чаплă елкăна
Çитеймест иккен пĕр çимĕç,
Çитеймест «хăяр» кăна.

Вырăссен шултăра хăярĕ
Кирлĕ ÿсĕр нимĕçе.
Вĕсе кай, Орлов, вăр-варрăн
«Хăяр-çимĕç» тиесе.

Кĕттермерĕ пирĕн паттăр,
Тухрĕ хăвăрттăн вĕçсе.
«Хăяр» кăшт тăварлăрах та,
Ан ÿпкелĕр, нимĕçсем!

Сывлăша çурса вĕçевçĕ
Сĕм каç витĕр çул хывать.
Тăван çĕрĕн çак кĕтесĕ
Питĕ паллă Орлова.

Кунта ĕлĕк Невский пухнă
Хăйĕн вилĕмсĕр çарне.
Çакăнтан вăрçа вăл тухнă
Сыхлама тăван çĕрне.

Йытă-рыцарьсене хирĕç
Тăнă пирĕн паттăрсем.
Вилĕм тупнă сĕмсĕр нимĕç
Чĕррĕн пăр айне кĕрсе.

Халĕ те çав ирсĕр, сăхă
Тăшман курмĕ ыррине.
Александр Невский йăхĕ
Тухрĕ нимĕçсем çине.

Сывлăша çурса вĕçевçĕ
Сĕм каç витĕр çул хывать.
Тăван çĕрĕн çак кĕтесĕ
Чун пек паллă Орлова.

Хăй çул тытнă хулара та
Вăл, паллать кашни çурта.
Штурмăна калать:—Куратăн,
Ав ăçта тĕллев выртать.

Ĕлĕк ларнă вăл мăнаçлăн
Авалхи кервен дворец.
Халь унта тăшман вырнаçнă,
Ăна, шелсĕр пĕтерес!
Вĕçсе пычĕ ăмăрткайăк

Çывăхрах, аяларах.
Халь ĕнтĕ «сĕнмешкĕн» лайăх
Шар-тăварлă «хăяра».

Авалхи çурт çийĕ витĕр,
Ташлатса нимĕçсене,
«Хăярсем» тĕл ÿкрĕç питĕ—
Шăп çавра сĕтел çине.

— Мейĕр, çийĕр те çырлахăр, —
Акă «çимĕç» вăркăнать.—
Ытлашши ятламăр ахăр,
Кучченеçĕ çав кăна!

Нумайччен Орлов ĕçлерĕ,
«Хăналарĕ» нимĕçе.
Вăл пĕрре те шеллемерĕ
Ырă, сиплĕ «çимĕçе».

Çавтери аван ĕç пулчĕ,
Çыпăçуллă темелле.
Çуртран кĕл çеç тăрса юлчĕ,
Çурт танлашрĕ çĕрпеле.

Орлов туйрĕ çăмăлраххăн,
Халь юрать киле кайма.
Анчах çакă вăл çапах-ха
Тавăру сехмечĕ мар.

Вĕресе тăран хаярлăх
Ĕмĕрне ан сивĕнтĕр.
Саншăн, капитан Гастелло,
Саншăн, аслă тăван çĕр!

Моторсем юрлаççĕ юрă,
Çав юрра итлет тĕнче.

Тепӗр кун хыпар фронт урлӑ
Килчӗ партизансенчен:

— Кирлине туянчӗ нимӗç,
Летчик килнӗ каçхине
Кунта çӗр те вӑтӑр иккӗш
Тупрӗç вилӗмӗсене.

Тата лӑпӑр-лапӑр мар çав,
Пурте пулнӑ—офицер.
Летчик вӗсенне хӑварчӗ
Мухмӑрӗсене чӗртсех.

## 15. Хумханullӑ маршрут

Çапӑçура хӗл иртрӗ.
Хӗрӳ çу кунӗ çитрӗ.
Тӑванӑм, эсӗ пултӑн
Çӗр çирӗм вӗçевре.
Тӗтре купийӗ урлӑ,
Декабрь пӑрӗ витӗр
Çӗр çирӗм хут эс тухрӑн
Çӗр çирӗм вилӗмрен.

Вилӗмпеле эс тӑнӑ
Ялан та куçа-куçӑн;
Анчах ялан çӗнтернӗ
Чӗр пурнӑç вилӗме.
Хӑюллӑ ӑмӑрткайӑк,
Çунатлӑ çӗнтерӳçӗ,
Вутра та эс, шывра та
Çунма, путма пӗлмен.

Самолету пӑрланнӑ,
Ал-уруна тӑм илнӗ.

Винтсем пăра тĕпретнĕ,
Пăр çапăннă пите.
Ик куç тулли юн тулнă
Снаряд та пуля пинĕн
Сан чĕрене шыранă,
Шыранă сан ӳте.

Анчах та вăрçă çулĕ
Тамăкри пек пулсан та,
Самолета, тăванăм,
Аллу сан вĕçертмен.
Тӳпе тĕпрен кисреннĕ,
Тĕнче вутпа пăтраннă,
Çапах эс нихăçан та
Çурма-çула пĕлмен.

Эс çĕршыва саватăн,
Эс пурнăçа сыхлатăн,
Сана çӳле çĕкленĕ
Хăватлă юрату.
Халь эсĕ Атăл çийĕн
Çӳлте вĕçсе пыратăн,
Çĕршывăн юратăвĕ—

Вăл санăн çунатту.
Сана задани панă.
Хĕвеллĕ тӳпе тăрăх
Н. хулинчен вĕçетĕн
Тăван Мускавалла.
Маршрут выртать çап-çутă
Çу кунĕ тăрă-тăрă,
Çуралнă Ямаш урлă
Паян сан каçмалла.

Мухтавлă Аслă Атăл,
Тӳлеккĕн те ачашшăн

Çĕршыв кăкри çинче вăл
  Йăлтăртатса выртать.
Тискер те сĕмсĕр нимĕç
  Атăл çине тухасшăн,
Вăл çĕршыва пăвасшăн
  Выç кашкăр пек пыртан.

Юратнă Аслă Атăл,
  Пирĕн тăван аннемĕр,
Эс пирĕнне упратăн
  Чыса та тивĕçе.
Вилсен те, чĕрĕлсен те
  Эс пирĕн ĕмĕр-ĕмĕр,
Вилсен те, чĕрĕлсен те
  Памастпăр нимĕçе!

Орлов паян хаваслă.
  — Ачсемĕр, юрă юрлăр!
Экипажне чĕнет вăл:
  — Паян юрламалла!
Гастелло самолечĕ
  Чăваш çĕршывĕ урлă
Чи хаклă тус-тăван пек
  Вĕçет Мускавалла.

Тăват мотор кĕрлевĕ
  Мухтавлă Атăл çийĕн,
Юратнă çĕршыв тăрăх
  Мăнаçлăн янăрать.
Тăван чăваш çĕршывĕ,
  Тăванăмăр Россия,
Кунçулăмăр, хăватăмăр,
  Телейĕмĕр санра.

Телейшĕн, çутă куншăн
  Çĕкленнĕ Степан Разин.
Атăл çинче çуралнă
  Хăюллă юрăсем.
Çава та сенĕк йăтнă
  Чăваш сынни-пăлхавçă.
Атăлпала хăпарнă
  Çилтăвăл кĕрлесе.

Телейшĕн, çутă куншăн
  Хумханнă Аслă Атăл.
Пугачевпа çĕкленнĕ
  Татах çĕнĕ хумсем.
Телейшĕн, çутă куншăн
  Вĕçеççĕ халь, куратăн.
Пугачевпала Разинăн
  Çунатлă йăхĕсем.

Ак Атăлăн вăрманлă
  Çыранĕсем пуçланчĕç,
Ешĕллĕхре çут Атăл
  Кулать, йăлтăртатать.
— Пăхсам, Милостивенко,
  Çĕр çинелле пăхсамччĕ,
Тăван чăваш çĕршывĕ
  Мĕнле тӳлек выртать.

Пăхать Милостивенко—
  Вутри Украйна ывăлĕ,
Пĕр савăнăç, пĕр хуйăх
  Куçĕсенче çиçет.
— Тăван чăваш çĕршывĕ
  Вăл ĕмĕр лăпкă сывлĕ,
Федот, кунта нихçан та
  Кĕртместпĕр нимĕçе!

Çапла калать вăл хыттăн.
  Сăмах янрать тупа пек.
Куç сиктермесĕр штурмăн
  Пăхать шав çĕрелле.
Хăватлăн та мăнаçлăн
  Пырать вĕсен карапĕ,
Тўлек чăваш çĕрне вăл
  Шанчăк кўрсе кĕрлет.

Çĕрех пăхать Орлов та
  Ун, чунĕ хумхануллă.
Хăй тусĕн çав сăмахĕ
  Чĕрере вут чĕртет.
— Çапла, Милостивенко,
  Сăмахху, тĕрĕс пулĕ,
Кунта ылханлă нимĕç
  Кĕреймĕ ĕмĕрте!

Çапла вĕсен карапĕ
  Мăнаçлăн шунăçемĕн
Республика пейзажĕ
  Пуянлансах пырать.
Ăçта авал вăрахăн
  Упасем çеç ўленĕ,
Унта заводăн корпусĕ
  Кĕрнеклĕн хăпарать.

Ăçта вăл асат хуçнăн
  Ахлатнă сухапуçĕ,
Унта халь тырă тинĕсĕ
  Тўлеккĕн хумханать.
Унта халь илĕртўллĕн
  Вылять телей çăлкуçĕ,
Унта—этем хăватлă,
  Хуçа вăл хăй кăна.

Тӳлек шывсем ҫине ав
  Ялсем пӑхса лараҫҫӗ
Хӑйсен ҫап-ҫутӑ ӗмӗглӗ
  Таса куҫӗсемпе.
Улӑхсенче хӗрӳллӗн
  Хӗрсем утӑ ҫулаҫҫӗ,
Шап-шурӑ ретӗн тӑнӑ
  Чипер акӑшсем пек.

Мотор шавне илтсессӗн,
  Вӗҫевҫӗсене хирӗҫ
Чи ӑшӑ саламсем пек
  шур тутӑрсем вӗҫеҫ.
Орлов ҫакна курать те
  Татах калать вӑл ҫирӗп:
— Кунта эп ӗмӗр ямӑп
  Ылханлӑ нимӗҫе!

Умра тӑван столица—
  Чӑвашӑн тӗп хулийӗ,
Атӑл хӗрне мӑнаҫлӑн
  Вырнаҫнӑ Шупашкар.
Чӑвашӑн паттӑр ывӑлӗ
  Вӗҫет паян ун ҫийӗн,
Ун кӑмӑлӗ хумханнӑ,
  Ун чунӗ лӑпкӑ мар.

Кунта—тӑван республикӑн
  Чӗрийӗ, ӑсӗ-пуҫӗ,
Кунта ӗҫлеҫҫӗ фронтшӑн
  Тин ӳснӗ заводсем.
Кунта тин ҫеҫ ҫӗкленнӗччӗ
  Телейӗн шурӑмпуҫӗ,
Ҫавӑн ҫинчен хавассӑн
  Юрлатчӗҫ поэтсем.

Хула, паян та лăпкă,
  Анчах вĕри хаярлăх
Хăватлă Атăл тăрăх
  Тапать пĕр тинĕсех.
— Туятăп,—тет вĕçевçĕ,—
  Шанса тăр, аслă халăх.
Кунта эп ĕмĕрне те
  Кĕртместĕп нимĕçе!

Çĕртен çынсем пăхаççĕ.
  Ик çăлтăра кураççĕ.
Çав çăлтăрсем çĕн шанчăк
  Кӳреççĕ вĕсене.
— Васка, тăванăм!—теççĕ,
  Вĕсем ыр çул сунаççĕ
Вĕçевçĕ эс туятăн
  Вĕсен чĕрисене.

Васкатăн эс, васкатăн,
  Çунаттусем сан вăйлă,
Тăват мотор хăватлăн
  Анăçаллах туртать.
Анчах умра, куратăн,—
  Хăю пек çутă Вылă,
Ем-ешĕл улăхра вăл
  Йăлтăртатса выртать.

Çуралнă ыр кĕтесĕн
  Асамлă вăйĕ пур-тăр,
Хăй еннеллех чĕнет вăл,
  Йыхравĕ ун ачаш.
Ав, Омашне вăрманĕ
  Сулать сип-симĕс тутăр,
Ача чухнехи тĕлĕк пек
  Выртать тăван Ямаш.

Орлов чĕри татах та
  Тапма пуçларĕ хăвăрт:
Мĕнле тӳсен анмасăр
  Çуралнă çĕр çине!
Экипажне каларĕ:
  — Туссем чухлатăр хăвăр,
Кун пек чухне этемĕн
  Чĕрийĕ мĕнлине.

Хăватлă кайăка вăл
  Кăшт аяларах антарчĕ,
Унтан ял çийĕн çаврăнчĕ
  Виç хут кĕрлеттерсе,
Çав хушăра çĕре вăл
  Пĕчикçĕ вымпел ячĕ:
— Ку вăл Хветутăр сирĕн.
  Салам ялйышăмсем!

Шаççи çĕре лексессĕн,
  Кабинăран тухсассăн,
Орловăн тулса çитрĕ
  Хумханакан чĕри.
Хăй тĕллĕнех пит тărăх,
  Пĕр савăннăн, хурланнăн,
Куççулĕ юхса анчĕ,
  Ачалăх пек вĕри.

Йĕри-тавра вăл пăхрĕ:
  — Эх, манăçми уйхирĕм!
Ытарайми Ямашăм,
  Тăван ана-çаран!
Кунта пĕчĕк кĕтӳçĕ,
  Пушă йăтса ир-ирĕн,
Уç сывлăм тăрăх утнă,
  Телейсĕррĕн çарран.

Кунта халь океан пек
  Хумсем ярать тырпулă,
Вăл ирĕклĕ те тулăх,
  Ниçта çук пĕр çыран.
Самолета курсассăн:
  — Ку анчĕ мĕнле улăп?—
Тесе чупма пуçларĕç
  Çынсем пур таврараи.

Часах вĕсем кураççĕ,
  Часах вĕсем палласçĕ:
Юмахри мар, чăн улăп—
  Хветут тăра парать.
Комбинезонне хывать вăл.
  Ун куçĕсем кулаççĕ.
Хĕвел çинче çут орден
  Вут пек йăлтăртатать.

— Сывах-и, тăван халăх!
  — Сывах-ха, паттăр ывăл!
Анчах вăл паллаймасть-ха
  Пĕрне те çийĕнчех.
Ялта тăванĕ çук ун,
  Кашни тăван пек çывăх.
Вăл хăй те халăх ывăлĕ
  Çак аслă çĕр çинче.

Унтан Орлов сасартăк,
  Сасартăк асăрхарĕ:
Инçе те мар паллана,
  Ĕмĕр манми куçсем.
Асра—чечеклĕ çимĕк.
  Çав çĕмĕрт куçсем мар-и
Çăл шывĕнче вылянă
  Çăлтăрсем пек çиçсе!?.

Ун чух Хветутӑн кусӗ
Именнӗ те пытаннӑ.
Халь акӑ вӑл хӑюллӑн
Пике патне пырать.
Анчах та леш чӗнмесӗр
Пуҫне чикет вӑтаннӑн,
Икӗ енче халь унӑн
Икӗ ача тӑрать.

Хветут ик ачине те
Алла тытса хӑватлӑн
Ҫӳле, ҫӳле ҫӗклет те:
— Пӗрлех-ха,—тет,—вӗҫер!
Хӑй чӗринче татах та
Тупа туса калать вӑл:
— Кунта эп вихӑҫан та
Кӗртместӗп нимӗҫе!

— Аннен таса тӑприйӗ,
Якур мучин ыр ячӗ,
Тӑван Ямаш та ӗмӗр,
Ан курччӑр мӑшкӑла!—
Ҫапла вӑл тупа турӗ,
Ҫапла вӑл сӑмах пачӗ.
Ирпе ирех вӗҫтерчӗ
Татах вӑл фронталла.

## 16. Герой

Вӑл ларнӑ лӑпкӑ ҫӗр пӳртре,
Кӗскен хӑй шухӑшне тӗрленӗ.
Пӗр чарӑнмасӑр, инҫетре
Хаяр вӑрҫӑ сасси кӗрленӗ.

Каҫхи хӗрӳллӗ ӗҫсене
Дневникӗнче вӑл пӗтӗҫтернӗ.
Ҫапла хӑйне тӗрӗслеме
Пулни-иртнисене тӗпченӗ.

Кунта хӑйне вӑл хӗрхенмен,
Кӑлтӑк пулсан, хытах ятланӑ.
Ҫапӑҫура чи кирлине
Чӗрипеле ҫунса ыранӑ.

Ҫурма-ӗҫе вӑл юратман;
Ӑҫта, мӗскер тумасӑр юлнӑ,
Дневникӗнче вӑл пытарман,
Ҫавна ыран тума вӑл пулнӑ.

Тӑват мотор мӗн панине
Йӑлтах хаярлӑха кӗртесчӗ.
Тӑшманӑн ҫӗршӗннӗ пуҫне
Ялан Гастелло пек хӗртесчӗ.

Орлов черетлӗ каҫ валли
Хӑйне задани хатӗрленӗ
Кӗҫӗрхи каҫ аркатмалли
Чи йывӑр объекта тӗлленӗ.

Ҫапла паян та йӗркерен
Хӑй шухӑшне ҫырса хурсассӑн,
Вӑл тухрӗ лӑпкӑ ҫӗр пӳртрен
Вӑл пулчӗ тӗнчене курасшӑн.

Ҫӗрле—текех ҫапӑҫура,—
Тулта—вӑрман, ҫанталӑк ырӑ.
Хӗрсех халь ӗнтӗ колхозра
Тӑван ялйыш вырать пуль тырӑ.

Анчах кунта пĕр вĕçĕмрен
Кĕрлет хаяр та юнлă вăрçă.
Кунта çак чунсăр вилĕмрен
Çăлăнаймасть чи çирĕп хурçă.

Этем кăна тӳсет иккен,—
Шутлама ĕлкĕрчĕ çапла çеç;
Унтан курать вăл: пур енчен
Ун патнелле çынсем чупаççĕ.

Мăкăрланать тусан анчах,—
Мĕн пулнă-ши, мĕскер ăнманĕ?
Субординацие мансах
Чупать майорĕ, капитанĕ.

Малта ав Сушин капитан,
Унтан иртет Милостивенко.
Орлов пĕр нимĕн ăнланман,
Мĕн пулнине пачах пĕлмен-ха.

Тен, пулнă пуль пĕр-пĕр инкек?!.
Анчах çынсем хавас кулаççĕ,
Хăватлă тинĕс хумĕ пек,
Ăна тытаççĕ те йăтаççĕ.

Янрать уçланкăра урра,—
Фронтри юлташлăх пит хĕрӳллĕ.
— Мухтав—çунатлă паттăра!
Мухтав сана, çĕршыв геройĕ!

Ăна ывтаççĕ хытăрах,
Çӳлтен çӳле туссем çĕклеççĕ.
Пĕр нимĕнле болтанкăра
Хальччен кун чухлĕ силлеменччĕ.

Çуралчĕ митинг ăнсăртран:
— Кашни Орлов пек паттăр пултăр!
Çак вăрмантах пĕр-ик кунтан
Ăна параççĕ Ылттăн Çăлтăр.

Çав парнене алла парсан,
Фронт çар совечĕн членĕ ыйтрĕ:
— Мĕскер каласшăн, капитан?—
Ытакласа ăна вăл тытрĕ.

Орлов ача пек пăлханса,
Кĕскен:—Ан тăвăр, терĕ, айăп.
Сăмаххăм тухас çук ансат,
Калассине ĕçпе эп калăп.

Фронтра çапла кăна сăмах,—
Вăхăт ахаль сая ан кайтăр.
Тăшман çине, каç пулсанах,
Орлов вĕçсе тухмашкăн хатĕр.

Ăна чĕнет тăван çĕршыв,
Ăна çĕклет герой çуначĕ.
Йĕри-тавра çунăк шăрши,
Ку пирĕн хуласем çунаççĕ.

Тăван çĕршыв аманнă чух
Ăçтан-ха чĕресем лăпланĕç?
Тăшман пĕтмесĕр канăç çук,
Çапăçура кăна халь канăç.

Çак шухăшпа вăл кĕçĕрех
Çапăçăва кайма шутларĕ.
Кĕçĕр вăл çапĕ вирлĕрех,
Герой ятне тӳрре кăларĕ.

Чăн та, паян городокра
Ун ячĕпе—хаваслă вечер.
Пулма лекмест пуль концертра,
Туссем каçарччăр, ан кӳренччĕр.

Ан пăшăрханччăр артистсем,—
— Çапăçăва!—тет Ылттăн Çăлтăр.
— Ҭен çитĕп те кайса килсен.
Ёçĕ кăна йĕркеллĕ пултăр.

Яланхинчен вăл хăвăртрах
Моторсене тĕрĕслеттерччĕ.
Çак самантра городокра
Пуçтарăннă уяв концерчĕ.

Клубра, чечек ытамĕнче
Ун паянхи портречĕ ларнă.
Фронтри поэт герой çинчен
Хĕрӳллĕ сăввине вуланă.

Унтан уяв сцени çине
Артистка тухнă кăшт именнĕн.
Вăл, вырăс халăх юррине
Ун ячĕпе юрлатăп, тенĕ.

Анчах пĕр сасă халăхран:
— Орлов ăçта-ха?—тесе ыйтнă.
Мотор сасси çак самантра
Илтĕнсе кайнă питĕ хыттăн.

Мĕнпур хăватлă моторсен
Мĕнпур заслонкине вăл уçнă.
Орлов сатуррăн кĕрлесе
Клуб урлă аслати пек куçнă.

Артисткăн витĕмлĕ юрри
Самантлăх кĕрлевре çухалчĕ.
Ун çепĕç туйăмлă чĕри
Вĕри хумханупа выляնчĕ.

— Орлов ку,—терĕç летчиксем,
Хавассăн алă çупса ячĕç.
... Кун пек тĕлĕнмелле ĕçсем
Пирĕн патра кăна пулаççĕ.

Вара артистка малалла
Хĕрӳллĕнрех юрла пуçларĕ.
Çав юрă пĕтĕм фронтпала
Инçе-инçе янраса карĕ.

Çав юрăра тулса тăрать
Тăван Российăн вăйхăвачĕ.
Çав юрă пирĕн паттăра
Нихçан сӳнми хастарлăх пачĕ.

Çав каç Орлов фашистсене
Мĕнпур хаярлăхпа çунтарчĕ.
Çав каç Орлов герой ятне
Татах, татах тӳрре кăларчĕ.

Унтан киле вăл таврăнать.
— Ĕç пулчĕ, тет, питех те лайăх!
Чăваш ачи, мухтав сана!
Мухтав, хăватлă ăмăрткайăк!

## 17. Америка хĕрĕн çырăвĕ

Хум хыççăн хум çĕклерĕ тинĕс,
Хум хыççăн хум чăн тĕпĕнчен.
Хум хыççăн хум кăвак та симĕс
Çырусем пек каяç инçе.

Шавлать, кӗрлет тинӗс хӑвачӗ,—
Лӑплантарайман эс ӑна!
Чӑваш ачин мухтавлӑ ячӗ
Океан урлӑ ӑсанать.

Вут-ҫулӑмра ҫуралнӑ чапӑн
Ҫуначӗ ҫил пек сарлака.
Ӑҫтан ҫӳлте вӗҫме чаратӑн
Хӑюллӑ ӑмӑрткайӑка?

Ҫапла чӑваш ҫӳле ҫӗкленчӗ,
Ӳн ячӗ юрӑ пек янрать.
Пичетленет Орлов портречӗ
Нью-Йоркра та Лондонра.

Кӑтра та йӗпкӗн хура ҫӳҫӗ
Инҫе тинкернӗ куҫӗсем,
Нимле ултавлӑ илӗртӳсӗр,
Чуна ҫавраҫҫӗ пӑхнӑҫем.

Эсӗ вара тӳрех калатӑн:
Ку сыннӑн чӗринче чӑнах
Никам ҫӗнтерейми хӑватӑн
Асамлӑ ҫулӑмӗ ҫунать.

Ҫапла тӗнче хальччен курман ӗҫ
Курать. Нимрен те тӗлӗнмен
Мӑнкӑмӑллӑ американец
Уҫать пач ҫӗнӗ кӑмӑлне.

Хальччен вӑл хӑй тӗлӗнтеретчӗ,—
О, Янки! тетчӗҫ тӗнчере.
Халь ак совет сыннин портречӗ
Кӗтмен ҫӗртен тӗлӗнтерет.

Çитменнине—чăваш, кĕтÿçĕ,
Герой вĕçевçĕ—О, ол-райт!
Аван!—тет инçетри союзник,
Вăл пирĕн ĕçсене ырлать.

Самолётсем, танксем пама та
Юрать, тет вăл, ку çынсене.
Тиевлĕ карапсем хăватлăн
Вара касаççĕ хумсене.

Вара шавлан океан урлă
Танксемпе çимĕç хушшинче
Çыру килет. Пайтах вăл хурлăх
Курать çав вăрăм çул çинче.

Шыв айĕнчен—хурах пек кимĕ,
Çÿлтен çăханĕ тапăнать.
Анчах та пÿлеймест пĕр нимĕн,
Пĕр нимĕн чараймасть ăна.

Антив, пăтрантăр хура тăвăл,
Тăшман вĕреттĕр аншăртне.
Америк хĕрĕн юратăвĕ
Вĕçсе çитет герой патне.

...Пĕр каç бомбежкăран килсессĕн
Орлов çав çырăва илет.
Çыру ăçтаннине пĕлсессĕн
Герой питех те тĕлĕнет.

Фотоÿкерчĕк. Пĕчĕк татăк—
Ют чĕлхепе çырнă çыру.
(Çак секретсемшĕн эп ыйтатăп
Геройăмран кăшт каçару).

Сăпайлă хĕр. Кăлкан пек шурă,
Укаллă, хумхануллă çÿç...
Тепĕр енче открытка урлă
Икĕ сăмах: Тăван—Союз!

Ку вырăсла. Анчах çырăвĕ
Акăлчанла. Тепĕр кунне
Орлов чылай çĕре çÿрерĕ
Пĕлмешкĕн хĕрĕн кăмăлне.

Тăлмач тупмашкăн çăмăл мар ĕç,
Анчах çапах пирĕннисем
Акăлчанла чухла пуçларĕç
Тăванлă туслăх ÿснĕçем.

Орлов журналиста тĕлпулчĕ:
Леш савăнса та хăвăртах
Куçарса пачĕ. Кăкăрта
Орловăн ырă кăмăл тулчĕ.

„Çунмастăп,—тет пике,—пĕлесшĕн
Эсир çемьеллĕ е хусах,
Анчах паян эпир пĕрлешнĕ.
Тăван та пĕр çемье пулса.

Юмах пек сирĕн пурнăç çулĕ.
Вăл çул пур кайăк çулĕнчен,
Чи çÿллĕ сăртсенчен те çÿллĕ,—
Сăмах çитмест ман тĕлĕнсе.

Эсир чăваш. Çавăн пек халăх
Пурри çинчен пĕлтĕм паян.
Ой, пархатарлă çутçанталăк,
Мĕн пек эс аслă та пуян!

Океан урлă эп хăям-и
Сире тăванăн ал пама!
Хумхан, хăватлă океанăм,
Илсе çитер çак салама!

Салам çуначĕ пултăр çăмăл,
Кĕскелччĕр пирĕн çулйĕрсем.
Хум урлă çиттĕр ырă кăмăл,
Тĕлпулăпăр-ха çĕнтерсен.

Тĕлпулăпăр. Телей сунатăп
Сире çак юнлă вăрçăра.
О, сирĕн сарлака çунатăр
Пире те тамăкран çăлать.

Хумхан, хăватлă океанăм,
Ыр туслăха савса кĕрле!
Эпир халь ĕмĕр пĕр тăванăн
Утатпăр сирĕнпе пĕрле».

Çыру вĕçленчĕ. Ăшă çил пек
Вăл тулчĕ летчик кăмăлне.
Орлов сасартăк аса илчĕ
Кунта Çулпуçăн сăмахне.

Çав çутă чăнлăх тухса тăчĕ
Чи аслă шурăмпуçĕ пек:
«Пĕрлешĕ пирĕн тĕрĕс вăрçă
Пур халăхсенĕн вăрçипе!»

## 18. Сарсков колхозник самолет илет

Кăнтăрти çеçенхир
    çулăмпа ĕнсе кайнă.
Вутпала пăтранса
    вĕрет тĕпсĕр хуран.

Тусан витĕр хĕвел
курăнать суран майлă,
Пăхма çук ун çине,
тен, вăл чăн та суран?!

Канăç çук, сывлăш çук,
шыв та çук çеçенхирĕн.
Пур кашнин чĕрере
пĕр хаярлăх анчах.
Тăшмана чармалла,
çапмалла ăна вирлĕн.
Тăр, боец, виличчен,
тăр, пĕр утăм ан чак.

Нимĕçе илĕртет
Кавказ нефчĕн шăршийĕ,
Ăна Дон кулачи
йĕкĕлтет, уртарать.
Тăшман танкĕ умне
хўме пек тăр, çĕршывăм,
Ху аваллăхунтан
пул эс паттăртарах!

Кантăк куç вилесен
выçă антăхнă çарĕ
Йытăлла хашкаса
малаллах ăнтăлать.
Халăх ывăлĕсем,
тăшмана тытса чарăр,
Ĕмĕр ан куртăр вăл
ĕмĕрхи Атăла.

Лăпкă Дон хĕрринче
сарăлать йывăр шăршă.
Ку вăл нимĕç çĕрет,
сывлăша варалать.

Хăй çапах хирĕнет,
    хăй çапах пирĕн çĕршĕн
Вилесен купи урлă
    кĕрет шалалла.

Юнлă йĕр хăварса
    танкĕсем ун шăваççĕ.
Нимĕçсен купипе
    чыхăнаççĕ шывсем.
Нимĕçсен купипе
    кĕперсем хывăнаççĕ,
Çавсем урлă каçса
    килеç çĕннисем.

Мускав айлăмĕнчи
    вутлă «çăкăр-тăваршăн»
Нимĕç тытнă кăçал
    урăх çул, урăх план,
Аслă Атăл çине
    çĕмĕрсе вăл тухасшăн,
Мускава хупăрласшăн
    таçтан аякран.

Унăн сĕмсĕр планне
    чăваш çĕрĕ те кĕнĕ.
Атăлпа тăвалла
    вăл шутланă килме.
Вăрăм хĕскĕчпеле
    хĕстерме ĕмĕтленнĕ,
Мускава, Мускава
    вăл сĕмленнĕ илме.

Картнă çирĕп кунсем
    ăсран кайнă ефрейтор.
Юмăç пăхнă картпа,

тухнă вырăнлă карт.
Анчах çав упăте
тĕлĕкре те кĕтмен-тĕр
Ун умне тăрасса
Сталинград.

Улăпла пĕвĕпе
Сталинград тăчĕ хирĕç,
Нихăçан парăнми
çĕршыв крепоçĕ пек.
Сталинград хӳмине
пырса тăрăнчĕ нимĕç
Юнпала вараланнă
чугун сăмсипе.

Тăватă уйăх кунта
юн хăсса тĕпĕртетрĕ,
Тăкрĕ вут, тăкрĕ бомба
ылханлă çăхан.
Кунчул çăмăр çуман
хулара ĕмĕрте те,
Кун чул пăр та çуман
нихăçан.

Хĕвел тулнă садсем
çунчĕç, сӳнчĕç, кĕлленчĕç,
Ӳкрĕç, ишĕлчĕç, вилчĕç
цехсем, корпуссем.
Анчах çак тамăка
пирĕн паттăр сынсем çеç,
Юмахри улăпсем пек,
ирттерчĕç тӳссе.

Тăшмана чаракан—
пулчĕ пирĕн этем вăл,

Унăн харсăр чĕри,
    унăн хурçă алли.
Сталинград! Çак сăмах
    пулчĕ пирĕншĕн символ,
Пулчĕ çирĕплĕх, чăтăмлăх,
    туслăх палли.

Тĕнче куçĕ ялан
    Сталинград çинче тăчĕ.
Тĕнчери çĕршывсем,
    сводкăсем мĕнлине
Куллен-кун сăнаса,
    тĕпчесе тытса пычĕç
Дипломатин чее
    сикекен кŷмине.

Туссем тус пек пулса
    пире пулăшрĕç ыррăн,
Пире панă танксем
    пулчĕç вырăнсăр мар.
Репродуктор умне
    тăрса пурте ир-ирĕн
Эпир пĕтĕм чунтан
    кĕтнĕ ырă хыпар.

Хыпарсем... Çук вĕсем
    çăмăл марччĕ чĕрешĕн.
Анчах шанчăк хурçи
    пур-пĕрех тутăхман.
Сталинград тăшманпа
    чăн Антей пек кĕрешнĕ,
Урисем ун саман та
    çĕртен татăлман.

Вырăс çĕрĕ çинче

çирĕп тăнă çав Улăп,
Пĕтĕм халăх ăна
кӳнĕ аслă вăйхал.
Çĕпĕртен, тайгаран,
Урал тăвĕсем урлă
Килнĕ вĕçĕмсĕр çар,
хĕçпăшал.

Сталинградшăн кашни
чĕринче пухнă çилĕ.
Орлов хăй фронтĕнче
тăкнă шелсĕр кăвар.
Габайдуллин та Лаптев,
Винокуров, Ефимов, Васильев,
Кашнин пулнă пĕр шут:
— тăшмана аркатар!

Аркатар тăшмана!
Пурнăçпа сĕмсĕр вилĕм
Хĕрхенмен пĕр-пĕрне
юнлă тытăçура.
Анчах кĕтнĕ хыпар
тем пулсассăн та килĕ,
Пурнăç вилĕм умне
пулса ӳкмĕ чура.

Кашни каç, кашни ир
эпир кĕтнĕ те çуннă,
Пĕтĕм сулăмĕпе
тапнă пирĕн чĕре.
Сталинград халăхсен
çутă шанчăкĕ пулнă,
Янăранă çак ят
пĕтĕм çут тĕнчере.

Кӗрхи пӗр каҫхине
вара пурте сасартӑк
Илтрӗҫ ӗмӗр манми—
наступлени—сӑмах
Юлашки сехетре...
Ӳкнӗ кӑмӑл хӑпартӑр!
Паттӑр кӑмӑл, кӗрле
тата сулӑмлӑнрах!

Ирпе пирӗн ҫынсем
пӗр-пӗрне саламлаҫҫӗ.
Сталинград!—тет пӗри;
Сталинград!—тет тепри.
Ҫынсен кӑкӑрӗсем
ҫӑмӑлраххӑн сывлаҫҫӗ.
Ҫӑмӑлраххӑн тапать
пур ҫӗршывӑн чӗри.

Станоксем хыттӑнрах
ҫавӑрӑнма тытӑнаҫҫӗ.
Ялсенчен хулана
туртӑнаҫ обозсем.
Тӗнче ӗмӗр курман
туйӑмсем вӑранаҫҫӗ,
Чи шалти, чи вӗри,
чи пуян туйӑмсем.

Кузьма Минин ӗҫне
тӑван ҫӗрӗмӗр курнӑ,
Анчах ку урӑххи,
урӑх ӗмӗр кунта.
Мӗнпур пек кӗтесрен
вӑрмансем, тусем урлӑ
Халӑх вӑйӗ куҫать
Ҫӗнтерӳллӗ фронта.

Кузьма Мининӑн ӗҫӗ
    пулнӑ аслӑ, хӑватлӑ,
Анчах ҫӗр ҫакӑн пек
    тӗпренех хускални
Нихӑҫан та пулман.
    Ферапонт Головатый
Самолет туянать
    паттӑр летчик валли.

Ҫӗршыва ирсӗрлен
    сӗмсӗр нимӗҫе хирӗҫ
Вырӑс ҫӗрӗ тӑрать
    пӗтӗм сулӑмӗпе.
Вӑранаҫ вӑрмансем,
    ҫӗкленет уй-хирӗ,
Халӑх вӑйӗ кӗрлет
    океан хумӗ пек.

Тулса пухӑннӑ вӑл,
    тӑван ҫӗрӗн хӑвачӗ,
Ҫулпуҫ сутнӑ хӗвелӗн
    хӗрӳ ӑшшипе.
Орлов паттӑр валли
    самолет заказ пачӗ
Ват колхозник Сарсков,
    ун тӑван ашшӗ пек.

Самолетсем, танксем
    эскадрильйӑн, колоннӑн
Ҫуралса ҫитӗнеҫҫӗ
    унта та кунта.
Ҫурхи Атӑл ҫинче
    талккишпе пӑр тапраннӑн
Колхоз вӑйӗ куҫать
    ҫӗнтерӳллӗ фронта.

Виçи çук, чикки çук
    халăхсен вăйхавалĕн,
Наступлени пырать
    пур енчен малалла.
Авалхи Кремльтен
    халăха аслă Сталин
Хĕрлĕ Çар ячĕпе
    ыр сунса саламлать.

Пирĕн çар çĕнĕ кун,
    çĕнĕ ĕмĕр пуçларĕ.
Хурçăран тăхса тунă
    хаяр ункăра
Пĕтрĕ, çунчĕ, кĕлленчĕ
    фон Паулюс çарĕ.
Ĕмĕр палăкĕ пулчĕ
    тăван Сталинград.

Сталинград! Вăл пире
    ĕçре çĕнĕ вăй пачĕ,
Вăл çывхартрĕ
    пулас çĕнтерӳ уявне.
Станоксем хыттăнрах,
    хăвăртрах çаврăнаççĕ
Вăхăтра пурнăçласшăн
    Сарсков заказне.

Аслă Сталин çапла
    Сарскова сăмах панă.
Эпир акă завод
    аэродромĕнче.
Мĕнчул «кайăк» кунта
    тин кăна çунат сарнă,
Иртет ватă колхозник
    вĕсен умĕнчен.

Вăл сăнать, тĕрĕслет,
    пысăк влаçлă хуçа пек.
Ак Орлов та утать
    унпала юнашар.
— Начар мар, — тет колхозник,—
    геройăмăр чапĕ,
Самолечĕ те унăн
    ан пултăр начар!

Анчах самолетсем
    пурте çĕнĕ те лайăх.
Орлов ултă йышши
    аппаратпа вĕçет.
— Акă,—терĕ Сарсков,—
    ак сана, ăмăрткайăк,
Вĕç эс çиçĕм пулса,
    вĕç çӳлте, вĕç инçе.

Ку пач çĕнĕ йышши,
    кун çинчен халĕ çеç-ха
Вĕренсеччĕ Орлов
    кану вăхăтĕнче.
Ĕнтĕ пирĕн вĕсем
    чылай йышлăн вĕçеççĕ
Аслă халăх вăрçин
    аслă фрончĕсенче.

Акă вăл, кĕр те лар,
    алăкне яри уçнă:
Кĕрсе лар та вĕçтер
    фронталла, малалла,
Чаплă самолета
    ватă, тимлĕ колхозник
Куçпа мар,
    тĕрĕслерĕ, тĕпчерĕ алпа.

Унтан вăл Орлова
    тăван пек ыталарĕ:
— Тур сыхлатăр, Хветут,—
    терĕ вăл мучилле.
Çĕршывран нимĕçе
    хытăраххăн хăвалăр,
Сывă пул,
    çĕнтерӳпе кĕтетĕп киле.

Героя ăшă хум
    килсе саврĕ ачашшăн.
Чĕрене ăшă хум
    мĕн пек ырă, аван!
Унăн пур тăван çĕр,
    унăн пур тăван ашшĕ
Тен, вăл уншăн паян
    тăванран та тăван.

Чĕркуçланчĕ Орлов,
    тупа турĕ яланлăх:
—Халăх ячĕ çĕре
    нихăçан ӳкес çук.
Саншăн таптăр чĕре,
    асăмри аслă халăх,
Саншăн эп тĕнчере
    тытăп чи тĕрĕс çул!

Унтан тăчĕ Орлов,
    самолет ăшне кĕчĕ.
Çĕнтерӳллĕн, хăватлăн
    кĕрлеç моторсем.
Акă вăл хăлаçланчĕ,
    вылянчĕ, çĕкленчĕ,
Уйăрлу кăмăлне
    çилпеле вĕçтерсе.

Ырӑ ҫул, сывӑ пул!
Кунӗ кӗтнӗ пек лайӑх.
Ҫу хӗвелӗ кулать.
Вӑхӑт шӑп кӑнтӑрла.
Ҫӗнӗ самолетпа
ывӑнми ӑмӑрткайӑк
Тухса кайрӗ татах
фронталла.

1943 ҫул.

# ТУПМАЛЛИ

Стр.

Çĕршыв пехиллени . . . . . . . . . . . . . . 3
1. Кĕтÿçĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 4
2. Якур мучи юмахĕ . . . . . . . . . . . . 9
3. Шкулта . . . . . . . . . . . . . . . . 16
4. Уявсемпе кÿренÿсем . . . . . . . . . . . 18
5. Ĕмĕт çунатланать . . . . . . . . . . . . 25
6. Чăваш ачи çулĕ . . . . . . . . . . . . . 32
7. Тÿлек те лăпкă каç . . . . . . . . . . . 35
8. Гастелло ĕçĕ . . . . . . . . . . . . . . 40
9. Ку—таврăру каçĕ мар-ха . . . . . . . . . 44
10. Хаярлăх ÿсет . . . . . . . . . . . . . 47
11. Гастелло самолĕчĕ пурăнать . . . . . . . 51
12. Мускавшăн . . . . . . . . . . . . . . 54
13. „Кăвак дивизи" . . . . . . . . . . . . 63
14. Вырăс хăярĕ . . . . . . . . . . . . . 69
15. Хумханулă маршрут . . . . . . . . . . 37
16. Герой . . . . . . . . . . . . . . . . 82
17. Америка хĕрĕн çырăвĕ . . . . . . . . . 87
18. Сарсков колхозник самолёт илет . . . . . 91

Редактор С. Эльгер

НТ 00125 Подписано к печати 9-V-44 г. Объем 3,25 п. л. Тираж 3000 экз. Заказ 585

г. Чебоксары, тип. № 1 Упр. Полиграфпромышленности при СНК ЧАССР

Б
Э. 4.

Цена 6 руб.

Арк. ЭСХЕЛЬ

ОРЁЛ

ПОЭМА

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ

Чебоксары — 1944